Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 11 ВЫРСАРНИКУН 283 (5096) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат̆ ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăçĕ пайĕн—7—97, ялхуçалăх пайĕн — 4—97, совет пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Çитес çулти вăйлă тырпулшăн социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йарар

1938 çул тăван çĕршывăн социалисăмлă йалхуçалăхĕнче çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳ тунипе паллă пулса вĕçленет. Çав чаплă çĕнтерӳн малтанхи итогĕ çинчен Совет правит̆елствин пуçлăхĕ В. М. Молăтăв йулташ Мускав Совечĕн Окт̆абĕр револ̆уци 21 çул тултарнă йатна пулнă чаплă ларăвĕнче 1938 çулти нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра çапла каласа панă: „Пирĕн йалхуçалăхĕ кăçал Атăл тăрăхĕнче тата унăн таврашĕнчи хăшпĕр облăçсенче çулла типĕ çанталăк пулнипе паллă йаварлăхсем тĕл пулчĕ.

Çапла пулсан та, пухса илнĕ тĕштырăсен пĕтĕм хисепĕ 1936 тата 1935 çулсенчинчен ытларах тата иртнĕ çулта пухса кĕнĕ пĕтĕм хисепрен кăшт кăна кайарах, ун чухне епĕр чи пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ...

Тĕштырăпа кăна мар, çĕрмамăкĕпе те, сахăр кăшманĕпе те, йалхуçалăхĕн ытти кул̆турисемпе те епĕр государствăна мĕн кирлине халĕ пурне те çителĕклĕ тăратма пултаратпăр".

Халĕ пур колхозсенче те колхозниксем хăйсем çулталăк хушшинче тунă ĕçсен итогĕсене савăнăçлăн палăртаççĕ.

Чăваш республикĕнчи нумай колхозсем агротехникă ĕçĕсене пурнăçа кĕртсе пынипе, çине тăрса, стаханăвла ĕçленипе, уйар çанталăка пăхăнмасăр кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа гектартан 95 пăт тырă, Тутаркас районĕнчи „Хĕрлĕ паттăр" колхоз гектартан 115-шер пăт ыраш, Канаш районĕнчи „Комсомол" колхоз гектартан 100-шер пăт ыраш, 125-шер пăт кĕрхи тулă пуçтарса илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене тата нумай кăтартса пама пулат̆.

Кол̆цовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем хăйсен колхозĕ вунă çул тултарнă йубилейĕнче Сталин йулташ патне йанă çырура çапла çыраççĕ. „Пире государствă ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе панă çĕр хамăр çĕршывра туса кăларнă чи лайăх тракторсемпе ĕçленипе çав тери тĕлĕнмеле чаплă çимĕçсем парат̆. Епĕр тӳрĕ кăмăлпа тата пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлесе кашни çул пысăк тухăçлă тырпул туса илетпĕр. Епĕр, çĕнĕ агротехникăна вĕренсе алла илнĕ колхозниксем, кирек мĕнле йаварлăха та çĕнтерме вĕренсе çитрĕмĕр... Кăçал пирĕн колхоз пысăк тухăçлă тĕштырă туса илчĕ—гектартан 15,8 центнĕршер пухса кĕртрĕ. Уйрăм кул̆турăсемпе унтан та ытларах. Кăçал пирĕн колхозра ĕçкунĕ пуçне 5,5 килограм тыррăн, 90 пус укçан валеçĕнет..."

Пирĕн колхозниксем вăйлă тырпулшăн, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илессишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнса, пысăк çитĕнӳсем тураç.

Халĕ, йалхуçалăх çулне вĕçленĕ чухне, социалисăмлă ăмăртăван 1938 çулти итогне туса, стаханăвла ĕçсен лайăх опычĕсене пур колхозсене те сармала. Çавăнпа та районпа район, колхозпа колхоз хушшинчи социалисăмлă ăмăрту договăрĕсене мĕнле пурнăçланине тĕплĕн тĕрĕслени кирлĕ. Çулталăк хушшинчи кĕрешӳ результачĕсене пур колхозниксене те тата йалхуçалăх специалисĕсене пĕлтерсе, çитес 1939 çулти вăйлă тырпулшăн, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илессишĕн, йалхуçалăхĕнче çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳсем тăвассишĕн социалисăмлă ăмăртăва халех сарса йарас пулат̆.

Кол̆цовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем тата Кол̆цовкă колхозĕн йубилейне пухăннă республикăри чи лайăх колхозсен представителĕсем Чăваш республикĕнчи пур колхозсене те 1939 çулта вăйлă тырпул туса илес, выл̆ăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне хăпартас тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йама пит те вăхăтра чĕнчĕç.

Кол̆цовкă колхозникĕсем чĕнсе каланине колхозсемпе бригадăсенче сӳтсе-йавса, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн, уйрăмăнах çуракине лайăх ирттерессишĕн, выл̆ăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана тултарассишĕн тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерессишĕн конкретлă обйазател̆ствăсем илсе, пурин те социалисăмлă ăмăртăва тухмала.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Обкомĕ „Чăваш республикĕнчи колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмеле тăвасси çинчен" йышăннă постановлени çĕрĕç органĕсене, пур колхозсене те ĕç программи пачĕ. Вăл постановлени тăрăх пирĕн колхозсенче агротехникăлă ĕçсене анлăн пурнăçа кĕртсе пырса, кашни çулленех, çанталăк уйар пулсассăн та, вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмеле.

Ку постановленипе: „ПСК(б)П Обкомĕ тата ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ орденлă Чăваш республикĕнчи мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсем, йалхуçалăх специалисĕсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем, парти, совет тата комсомол организацисем, халăх тăшманĕсен йулашкийĕсемпе пуринпе те татăклăн кĕрешсе пырса, йалхуçалăхĕнче сăтăрлăх йулашкийĕсене пĕтерсе пырса, социалисăмлă ăмăртупа массăлă стаханăвла йухăма сарса, 1939 çула социалисăмла йалхуçалăхĕнче халиччен курман çĕнтерӳсем тумали çулталăк тата колхозлă ĕç халиччен курман показател̆ĕсем панă çулталăк туса хума çĕнĕ çĕнтерӳсемпе ăнăçусем тăвĕç тесе тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ çулленех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илме панă лозунга пурнăçа кĕртĕç тесе шанса тăраççĕ", тесе каланă.

Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз тата унпа пĕрле республикăри чи лайăх 120 колхоз представителĕсем ПСК(б)П Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ лартнă çак задачăсене пурнăçлама чĕнсе калани пулат̆. Çавăнпа та пур парторганизацисен, çĕрĕç органĕсен, колхозсен малашах асăннă чĕнĕве ответлесе, 1939 çула социалисăмла йалхуçалăхĕнче халиччен курман пысăк çитĕнӳсем тумали çулталăк туса хума социалисăмлă ăмăртăва анлăн организацилемеле.

Шупашкар хулинчи интеллигенци—Сталин йулташа

Мускав, Кремљ

Иосиф Виссарионăвич Сталина

Хаклă Иосиф Виссарионăвич!

Епĕр, Шупашкар хулинчи—орденлă Чăваш республикĕн столицинчи совет интеллигенцийĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине сӳтсе-йавма пухăннăскерсем, Сире, Ленин ĕçĕсене малала йарса пыракана, пĕтĕм ĕççыннисен аслă çулпуçне, ашшĕне, учителне бол̆шевикла хĕрӳлĕ салам йаратпăр.

Епĕр çут тĕнчене „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" — çак Есĕр хăвăр, Сталин йулташ, тӳрех хутшăнса ĕçленипе хатĕрленĕ наукă йенчен тарăн шухăшлă кĕнеке, бол̆шевисăмăн идейăлă хăватлă çĕнĕ хĕçпăшалĕ — бол̆шевиксен партийĕпе совет халăхĕн идейă пурнăçĕнче пысăк событи пулса тăракан кĕнеке тухнине социалисăм çĕршывĕнчи пĕтĕм интеллигенци пекех, пысăк интереспа, пĕтĕм кăмăлтан ырланипе йышăнса илтĕмĕр.

Ленинăн — Сталинăн геройла парти историне вĕренни пирĕн совет интеллигенцине бол̆шевисăмпа хĕçпăшаллантарат̆, ăна творчествăлă ĕçре пулăшат̆.

ПСК (б)П Тĕпкомĕн „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" кăларнă историлĕ решени пĕтĕм тĕнче умĕнче Ленин—Сталин партийĕ пирĕншĕн, совет интеллигенцийĕшĕн, коммунисăм строител̆ĕсен кадрĕшĕн ашшĕ хăйĕн ачишĕн тăрăшнă пек тăрăшнине кăтартат̆. Кадрсемшĕн çакăн пек тăрăшни вăл тата, çакăнпа пĕрлех, аслă совет халăхĕшĕн, ăна малала çĕклентерсе пырассишĕн, коммунисăм строител̆ствин малашнехи çитĕнĕвĕсемшĕн тăрăшни, социалисăмлă совет государствине тĕреклетни, социалисăмлă аслă тăван çĕршывăн оборонă хăватне тĕреклетни пулат̆.

Пирĕншĕн çакăн пек Сталинла тăрăшни—пире марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илес, бол̆шевисăма вĕренсе алла илес, хамăр теори йенчен кайа йулса пынине пĕтерес йенĕпе тата ытларах ĕçлеме хушат̆.

Епĕр, Чăваш республикĕн столицинчи интеллигенци, пирĕншĕн парти тата Есĕр хăвăр, Сталин йулташ, çакăн пек ашшĕ хăйĕн ывăлĕшĕн тăрăшнă пек тăрăшнине уйрăмах çывăх туйатпăр. Помещиксемпе капиталиссем пуç пулса тăнă вăхăтра вĕренӳ прави кăна мар, хут пĕлмели права та пулман. Чăваш халăхĕ хăйĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн тăракан интеллигенцине советсен аслă епохинче кăна, Ленинăн-Сталинăн наци политикине пула кăна тума пултарнă. Çакă, Совет Чăваш çĕршывĕнчи рабочисемпе хресченсен тăван пайĕ пулса тăракан интеллигенци, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, коммунисăм татăклăнах çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ, малашне те кĕрешĕ.

Социалисăм çĕршывĕнче наукă, техникă, искусствă нихăçанхинчен те вăйлăн чечекленсе пынă вăхăтра, капитал çĕршывĕсенче фашисăм халăх ĕмĕрсен тăршшĕнче туса пынă искусствăна, наукăна, кул̆турăна пĕтерет, йеврейсене хирĕç йунлă погромсем тăват̆, геройла Испанипе Китайăн мирлĕ халăхне тискеррĕн пĕтерет.

Фашисла каннибалсене епĕр чĕререн кураймастпăр.

Мирлĕ йеврей халăхне вĕлерсе, çĕнĕ империалисăмлă вăрçă чĕртсе йарса, фашисăм хăй пурнăçне чăсас шутпа мĕн алла лекнĕ çавна йарса илет.

Епĕр, Сталин йулташ, Есĕр капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен, вăрçă хăрушлăхĕ умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тăрасси çинчен кăтартса панисене нихăçан та манас çук.

Хаклă Сталин йулташ! „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренсе епĕр хамăра общичествăлă аталану саккунĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантаратпăр, бол̆шевикла сыхăлăха тата çӳлерех çĕклетпĕр, халăх тăшманĕсене—фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларса пуçĕпех пĕтерессишĕн тата хăйуланрах кĕрешетпĕр, ПСК(б) Партин Ленинла-Сталинла Тĕпкомĕ тавра, пирĕн йуратнă çулпуçĕ, туспа учител тавра тата тачăрах пĕтĕçетпĕр, коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне тата ăнăçуларах кайатпăр.

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван атте, Аслă Сталин!

Резинăран йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт строител̆ствинче. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Рогожникăв йулташ йертсе пыракан платниксен бригади, плана 200 процент таран тултарат̆. Малти ретре (сулахайран сылтăмала): М. Е. Онуфрийĕв, А. М. Рогожникăв; иккĕмĕш ретре: Н. Т. Чернов, С. Г. Царегородцĕв, Д. О. Лоскутăв йулташсем.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Франци парламенчĕн çеççийĕнче

ПАРИЖ, декабĕрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Депутатсен палати правител̆ствăн пĕтĕмĕшлĕ политикине сӳтсе-йавас тĕлĕшпе парламентри группăсен председател̆ĕсен канашлăвĕ сĕннĕ регламĕнта йышăннă. Правител̆ствăн пĕтĕмĕшлĕ политикине сӳтсе-йавма вăхăт пурĕ 14 сехет çурă уйарнă. Çапла вара, правител̆ствăн пĕтĕмĕшлĕ политики тăрăх пренисем ыран кăç çĕрле тин пĕтеççĕ.

Пренире малтан сылтăм депутат Фернан Лоран тухса калат̆, вăл халăх фрончĕ çине урса кайсах тапанат̆. Вăл калат̆: епĕ хам тата ман майлă тăракан çынсем хал̆хи, фашисăма хирĕçле халăх фрончĕн пысăк пайĕ çине йышăнса тăракан правител̆ствăран пĕтĕмпех урăхла политикă тытса пыракан правител̆ствăшăн çеç шанăç парса сасăлама пултараççĕ. „Епĕр 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен кăларнă саккуна хирĕç тăратпăр", тенĕ Лоран, Францири ĕç конфедерацийĕ çине тапăнса.

Лоран сăмахĕ Франци реакцийĕ уççăнах пуç çĕкленине кăтартат̆.

Ун хыççăн Рене Шато (халăх фронтне кĕрекен ушкăн представителĕ) тухса каланă. Вăл каланă: епĕ правител̆ствăн тулашри политикине ырлатăп, анчах та унăн чрезвычайнăй декречĕсене ырлама пултараймастăп, çак чрезвычайнăй декретсене кăларнăшăн шеллетĕп, тенĕ. Оратăр, çавăн пекех тата, правител̆ствă рабочисен массине хирĕç репреççисем тăвас политикă тытнăшан та пăшăрханат̆.

Гитлерĕвĕцсем Пол̆шăра çĕнĕ требовани тăратнă

Германи фашисăмĕн Пол̆шăра ĕçлекен агентурă руководител̆ĕ—сенатăр пулнă Визнер т. ыт. Пол̆шă правител̆ствин представител̆ĕсене требовани тăратнă, уйта вĕсем Тешински Силезири нимĕçсен пурнăçне „йĕркелеме" хушаççĕ.

Пол̆шăра ĕçлекен гитлерĕвĕцсем нимĕç чĕлхине Пол̆шă чĕлхипе пĕрттан правалă тума, Пол̆шă влаçĕсем хупса хунă нимĕç шкулĕсене, библиотекисене, кĕнеке магазинĕсене пурне те уçма, салатса йанă нимĕç организацисене тепĕр хут ĕçлекен тума, нимĕçсене государствăпа администраци учреждениĕсенче, промышленнăçра т. ыт. çĕрте ĕçлемешкĕн ирĕк пама ыйтаççĕ. Гитлерĕвĕцсен çакăн пек сĕмсĕр требованийĕсем Пол̆шă общичествĕннăçне хыттăнах пăшăрхантарса ӳкернĕ.

(ТАСС).

Германири забастовкăсем

Германирен çар укреплениĕсем тунă çĕрте ĕçлекен рабочисем хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешнине кăтартакан çĕнĕ фактсем çинчен пĕлтереççĕ.

Чикĕре укреплениĕсем тунă çĕрте ĕçлекен рабочисене хăй вăхăтĕнче ĕçукçи вĕсем халиччен хăйсем ĕçленĕ предприйатисенче илсе тăнă чухлех пама пулнă. Анчах та çакăн пек сăмах пани пурнăçа кĕмесĕр йулнă. Фашиссем çакăн пек сĕмсĕррĕн улталанипе тарăхнă рабочисем, çар администрацийĕпе мĕнле ĕçленине сыхласа тăракан штурмовиксене хирĕç чылай стачкăсемпе уçă выступленисем туса ирттернĕ. Рабочисем çине тăрса хĕснĕ пирки администрацин уступкăсем тумала пулнă. Администраци рабочисене ĕçукçи хушса пама тата Саар облăçĕнчи пур строител̆ствă участкисенче ĕçлекен рабочисене те, çимĕçсем хаклине кура, уйрăм надбавкăсем пама пулнă.

(ТАСС).

Сталин йулташăн пл̆онкă çине çырнă сăмахне радиопа параççĕ

Пайан, декабĕрĕн 11-мĕшĕнче, ырăнти вăхăтпа 19 сехет те 30 минутра Мускаври радиостанцисем урлă, Сталин йулташăн Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче, Пысăк театрта, 1937 çулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнче каланă сăмахне (тонфил̆м) параççĕ.

Сталин йулташăн çав сăмахнех пайан, ырăнти вăхăтпа 16 сехет те 30 минутра, чăвашсен радио саракан РВ—74 станци урлă чăвашла вуласа параççĕ.

Грознăйри нефт̆анниксен паттăр ĕçĕ

Горнăй сăрчĕ çинче çĕнĕрен шăтарнă 32—2 номĕрлĕ скважинă çĕр айĕнче 1.220 метрта питĕ вăйлă нефт̆ сийĕ патне çитнĕ.

Кĕтмен çĕртен, тарăн мар ырăнтанах, питĕ вăйлă газ тапса тухнă. Газ йаланхи пек трубасем тăрăх мар, скважинăна йанă трубасен хыçĕнчен тухнă. Газ тапса тăни питĕ вăйлă пулнă, унăн кĕрлесе тăракан сасси темиçе километр инçетре илтĕннĕ.

Çак кĕтмен çĕртен килсе тухнă инкек пĕтĕм скважинăна çĕмĕрсе тăкма тата газ хăй те усăсăра тухса пĕтме пултарнă. Промысласенче пушар сиксе тухма пултарнă.

Сакăр талăк хушши паттăрăн кĕрешнĕ нефт̆анниксем çак пĕтĕм промысласене хăратса тăракан инкеке хирĕç. Малгобекран чĕнсе пынă çĕр шăтаракан кантур механикĕ Г. Рысенко, цементнăй парти механикĕ Н. Гурин т. ыт. хăйсен пурнăçĕшĕн хăрушла пулнине пăхмасăрах, газ вăйлăн тапса тăнă йăвăр условисенче скважинăна 12 дӳймлă колоннă йанă, çапла вара газ тапса тухассине чарса лартнă.

Халĕ скважинăна експлоатацине параççĕ. Çак ĕçре паттăрăн та хăйулăн ĕçленĕшĕн 11 çынна: Гурин, Рысенко, Ул̆ченко, Лаврен̆ук, Шаврăв т. ыт. йулташсене премиленĕ.

(ТАСС).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Фрунзе йачĕпе тăракан академийĕ 20 çул тултарат̆

МУСКАВ, декабĕрĕн 8-мĕш. 1939 çулти йанвар уйăхĕнче совет общичествĕннăçĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Фрунзе йачĕпе тăракан Ленин орденне илнĕ хĕрлĕ йалавлă Академийĕ 20 çул тултарнине паллă тăват̆.

Фрунзе йачĕпе тăракан академи—вăл пирĕн çĕршывра малта пыракан шкул. Унта Совет Сойузĕн Геройĕсем полковник Родимцĕв, полковник Погодин тата капитан Левченко, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ капитан Удал̆цов йулташсем вĕренеççĕ. Академинче вĕренекенсем хушшинче—орденоносĕцсем—165, Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусен участникĕсем—9, Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă командирĕсем, „Двадцать лет РККА" медал̆семпе наградăланисем.

Академинче йубилейе хатĕрленме тытăннă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

** Богородскойе йалĕнчен (Анат-Амур облăçĕ) 8 километрта геологоразведкă експедицийĕ промышленнăçшăн кирлĕ тимĕр тăпри выртакан вырăн тупнă. Малтанхи опытсем тăрăх тимĕр тăпринче 55 процент тимĕр пурри палăрнă.

** Керчре сел̆д тытма пуçланă. Керчри пулă тытакан станцă 2.700 центнĕр сел̆д тытнă та ĕнтĕ.

** Мускаври „Серп и Молот" савăтри стаханăвĕçсемпе ударниксем кăçалхи çул икĕ пин ытла изобретени, рационализатăрла сĕнӳсем панă. Пурнăçа кĕртнĕ сĕнӳсем 2.458 пин тенкĕлĕх перекет панă.

Савăтри изобретател̆семпе рационализатăрсене 160 пин тенкĕлĕх премисем панă.

** Декабĕрĕн 7-мĕшĕнче Батумири портра „Курск" тата „Крым" пăрахутсем çине 270 вакун мандарин тийенĕ, вĕсене Совет Сойузĕн тĕрлĕ хулисене йараççĕ.

** Толба йуханшывĕн районĕнче (Йакут республикĕ) 370 метр тарăнăшĕнче нефт̆лĕ извеçтн̆ак сийĕ тупнă. Шăтарса сăнаса пăхсан, пĕр талăк хушшинче 70 литр шĕвĕ нефт̆ тухнă.

** Государствăн „Искусство" издател̆ствин В. И. Ленин вилнĕренпе 15 çул тулнă тĕле чылай çĕнĕ изданисем кăларат̆. Сарданăн „Мы будем такими, как Ленин" йатлă йурри массăлă тиражпа пичетленет. Фортепианăпа йурлама Ленин çинчен хунă йурăсен иккĕмĕш циклĕ тухат̆. Циклра Мариан Ковал̆ăн çĕнĕрен çырнă пилĕк йурри пулат̆ (йурăсен сăмахĕсем Л. Ошанинăн). Майаковскин „Владимир Ильич Ленин" йатлă поеми тăрăх çырнă икĕ фрагмент (музыки Белайăн) тухат̆, вĕсене хорпа йурлама çырнă. Çак изданисем пурте декабĕр уйăхĕнче пичетленсе тухмала.

** Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Мариупол̆ри Илйич йачĕпе тăракан металлурги савăтĕнчи прокатнăй цехсем çулталăк планне срукчен 23 кун маларах тултарнă.

Малта пыракан №-6 цех коллективĕ хăйĕн заданинчен ирттерсе 16.325 тоннă прокат панă та ĕнтĕ. Домнăсенче ĕçлекенсем çулталăк планĕнчен ирттерсе 19.965 тоннă чукун шăратса кăларнă.

(ТАСС).

Германире економикăлă лару-тăру начарланни тата фашисла террор вăйлăланни

Германирен унти ĕççыннисен пурнăçĕ тата пушшех начарланни çинчен, промышленнăç вал̆л̆и чĕртавар тата апат-çимĕç тавращĕ пит те çителĕксĕрри çинчен пĕлтереççĕ.

Судет облăçĕнче апат-çимĕç продуктисем, уйрăмăн илсен çу кэлама çук çителĕксĕр пулни палăрат̆. Ернере мĕн чухлĕшер çу памали нормăна официаллă йĕркепех пĕчĕклетнĕ, анчах чăннипе илсен, халăх çав пĕчĕк нормăна та илеймест. Апат-çимĕç магазинĕсем умĕнче темĕн чухлĕ халăх кĕпĕрленсе тăрат̆. Унти çынсем: „Хал̆хи пурнăç вăрçă вăхăтĕнче пулнинчен те начартарах," тесе калаçаççĕ.

Фашиссен ĕççыннисене хирĕçле террорĕ сарăлсах пырат̆.

Фашиссен тискерлĕхне хирĕç, йеврейсене пусмăрланине, мăшкăланине хирĕç сăмах каланăшăн Дӳсселдорфра тата Вуппертал̆ре темиçе çĕр çынна арĕсленĕ. Пĕр килхуçи хĕрарăм погромсем вăхăтĕнче: „Телейсĕр йеврейсем", тесе кăна каланă. Çавăншăн вара ăна арĕсленĕ. Дӳсселдорф хулинчи пул̆ницăна темиçе вуншар йеврей илсе пынă, вĕсен куçĕсене тĕксе шăтарнă пулнă. Пул̆ница работникĕсем фашиссен тискер ĕçĕсем пирки тарăхса çиленни çинчен уççăнах каланă. Çакăншăн пул̆ницари темиçе сотрудникке арĕсленĕ. (ТАСС).

Китайри вăрçă

Центр Китайри фронтсенче лăпкă. Лăпкă вăхăт килсе тухнипе усă курса Китай чаçĕсем хăйсем йышăннă оборонă линисене тĕреклетеççĕ. Йапонĕцсем те Син̆цзйан йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕнче оборонă сооруженийĕсем тăваççĕ тата фронта çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ.

Суцзйан хули (Цийансун çурçĕр пайĕ) урамĕсенче пуçланнă çапăçусем Китай çарĕсем çĕнтернипе пĕтнĕ. Китайĕцсем çапăçура йапонĕцсенне 90 бронемашинă, 3 оруди пĕтерне. Йапонĕцсем хуларан артиллери хӳттипе тухса тарнă.

Кăнтăр Китайра Кантонран çурçĕр йеннерех, Тайпинчен районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Кунта йапонĕцсем хăйсен çухатнă позицийĕсене кайала таварма хăтланаççĕ. Йапонĕцсем кăштах малала кайнă.

Кантонăн кăнтăр йенче ĕçсем лăпкă тăраççĕ.

(ТАСС).

Пурнăçа кĕрет

Сталинабад хулинчи парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче ПСК(б)П историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Ленинăн „Развитие капитализма в России" йатлă кĕнеки çинчен икĕ лекци вуланă, „Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов" кĕнеке çинчен — висĕ лекци. Кашни кулленех консул̆таци ĕçлет.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" 1-мĕш сыпăкне вĕреннĕ чухне усă курмали кĕнекесен выставкине организациленĕ.

Çывăх кунсенчех лекцисем вуламали çĕнĕ зал уçăлат̆. Зал 300 çын вырнаçмалăх пулат̆.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

XII СЫПĂК

БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ СОЦИАЛИСĂМЛА ОБЩЕСТВĂ ТУСА ÇИТЕРЕССИШĔН КĔРЕШНИ ТАТА ÇĔНĔ КОНСТИТУЦИНЕ ĔÇЕ КĔРТНИ.

(1935—1937 çулсем)

1. 1935—1937 çулсенчи пĕтĕм тĕнчери лару-тăру. Економикăлă кризис вăхăтлăха çемçелни. Економикăлă çĕнĕ кризис пуçланни. Итали Абиççинине тытса илни. Германипе Италин Испанири интервенцийĕ. Йапони Центрти Китайа тапăнса кĕни. Империалисăмлă иккĕмĕш вăрçă пуçланни.

Капиталисăмлă çĕршывсенче 1929 çулăн иккĕмĕш çурринче пуçланнă економикăлă кризис 1933 çул вĕçне çитиччен тăсăлнă. Ун хыççăн промышлĕннăç ӳкни чарăннă, кризис пĕр вырăнта тăрассине куçнă, кайран вара промышлĕннăç кăштах чĕрĕлме, вăл кăштах çĕкленме пуçланă. Анчах ку çĕкленӳ ун хыççăн çĕнĕ, тата та çӳлерех, никĕс çинче промышлĕннăç чечекленме пуçланмали çĕкленӳ пулман. Пĕтĕм тĕнчери капиталисăмлă промышлĕннăç 1929 çул çӳлĕш таран та пулин çĕкленме пултарайман, 1937 çул çурри тĕлне вăл çав çӳлĕшĕн 95—96 процентне çеç çитнĕ. 1937 çулăн иккĕмĕш çурринче ĕнтĕ економикăлă çĕнĕ кризис пуçланса кайнă, вăл, чи малтан, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене çавăрса илнĕ. 1937 çул пĕтнĕ тĕле Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче ĕççĕррисен шучĕ çĕнĕрен 10 мĕлйун çын таран хушăннă. Ĕççĕррисен хисепĕ Англире хăвăрт ӳсме пуçланă.

Çапла вара, нумай пулмасă пулса иртнĕ економикăлă кризис çапăнничен тӳрленсе çитме ĕлкерейменех, капиталисăмлă çĕршывсем економикăлă çĕнĕ кризис умне тухса тăнă.

Çак обстойательствă акă мĕн патне илсе пынă: империалисăмлă çĕршывсем хушшинчи хирĕçӳсем, çавăн пекех буржуазипе пролетариат хушшинчи хирĕçӳсем те — тата ытларах вăйланнă. Çакăнпа пĕрле агреççивлă государствăсем хăйсен çĕршывĕ ăшĕнче економикăлă кризис кӳнĕ çухатусене ытти çĕршывсен шучĕпе, вăйсăр хӳтĕленнĕ çĕршывсен шучĕпе тавăрма пуçланă. Кунсăр пуçне, икĕ паллă агреççивлă государствă çумне — Германипе Йапони çумне ку расра виççĕмĕш государствă — Итали хутшăннă.

1935 çулта фашисла Итали Абиççини çине тапăнса, ăна хăйне пăхăнтарнă. Абиççини çине вăл, „тĕнчери права“ тăрăх пăхсан, ним сăлтавсăр-мĕнсĕр тапăннă. Халĕ фашиссен йăлине кĕнĕ пек, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕр, вăрăлла майпа тапăннă. Ку вăл Абиççинине çапни кăна мар пулнă. Çавăн пекех вăл Англине хирĕç, Англин Йевропăран Индине, Азине кайакан тинĕс çулĕсене хирĕç çапни те пулнă. Итали Абиççинине пырса вырнаçассине Англи чăрмантарма хăтланнисем резуљтатсем паман. Хăйĕн аллисене ирĕк парас тесе, Итали кайран Лигă Нацинчен тухнă тата вăйлăн хĕçпăшалланма пуçланă.

Çапла вара, Йевропăран Азине кайакан тинĕсри чи кĕске çулсем çинче вăрçăн çĕнĕ тĕвви çыхăннă.

Фашисла Германи Версаљре йышăннă мирлĕ догăвăра хăй тĕллĕн çĕмĕрсе тăкнă та Йевропăри государствăсен чиккисене ирĕксĕрлесе тепĕр хут пăхса тухас плана пурнăçа кĕртме палăртса хунă. Кӳршĕри государствăсене хăйсене пăхăнтарма тăрăшнине йе, сахалран та, вăл государствăсен нимĕçсем пурăнакан территорийĕсене тытса илме тăрăшнине нимĕç фашисĕсем пытарман. Вăл план тăрăх çакна тума палăртнă: малтан Австрине туртса илесси, унтан Чехословакине çапасси, унтан — Пољшăна пулĕ, унта та нимĕçсем пурăнакан, Германипе чиккĕленсе тăракан пĕтĕмĕшлĕ территори пур, кайран вара... кайран „куç курăт“.

1936 çулта, çулла, Германипе Итали Испани республикине хирĕç вăрçăллă интервенци пуçларĕç. Испани фашисĕсене пулăшас сăлтавпа Италипе Германи хăйсен çар чăçĕсене вăрттăн Франци тылĕнче Испани территорийĕ çине, хăйсен тинĕс флотне — Испани шывĕсем çине, кăнтăрта — Балеар утравĕсемпе Гибралтар районне, хĕвеланăçĕнче — Атлантически океан районĕсене, çурçĕрте — Бискайски залив районĕсене илсе пыма май илчĕç. 1938 çул пуçламăшĕнче Германи фашисĕсем Австрине йарса илчĕç, Дунай шывĕн вăтаçĕрти йухăмĕ таврашне кĕрсе вырнаçрĕç тата кăнтăр Йевропăра Адриатически тинĕс çывăхнерех пырса сарăлчĕç.

Испанине хирĕç интервенци вăйлатса, Германипе Итали фашисĕсем пурне те: епĕр Испанире „хĕрлисене“ хирĕç кĕрешетпĕр, епĕр урăх нимĕнле тĕллев те тытмастпăр, тесе ĕнентернĕ. Анчах та ку вăл айвансен ухмахлăхне шанса тунă чăрсăр та ăссăр маскировкă пулнă. Тĕрĕссипе вĕсем Англипе Франци çине çапнă, мĕншĕн тесен вĕсем Англипе Францин Африкăри тата Азири питĕ пысăк колонийĕсем патне каймали тинĕс çулĕсене йарса илнĕ.

Австрине йарса илнине илес пулсан, ăна Версаљри догăвăра хирĕç кĕрешес рамкăсене, пирвайхи империалисăмла вăрçăна пула çухатнă территорисене кайăла хăйне таврасшăн тăрăшакан Германин „нацилĕ“ интересĕсене сыхлас рамкăсене вырнаçтарма ĕнтĕ халĕ нийепле те май пулман. Австри вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та Германи составне кĕмен. Австрине ирĕксĕрлесех Германи çумне çыпăçтарни йут территорине чăрсăрла-империалисăмла йарса илнине пĕлтерет. Вăл, иккĕленмели çук, фашисла Германи Хĕвеланăç Йевропă континентĕнче пуç пулса тăракан вырăн йышăнма тăрăшнине уçса кăтартăт.

Ку вăл, чи малтан, Франципе Англи интересĕсем çине çапни пулнă.

Çапла ĕнтĕ, Йевропă кăнтăрĕнче, Австрипе Адриатикă районĕнче, Йевропăн чи хĕвеланăç хĕрринчи Испанине ун таврашĕнчи шывсен районĕнчи пекех, вăрçăн çĕнĕ тĕввисем çыхăнчĕç.

1937 çулта Йапонин фашисла войенщинни Пекина туртса илчĕ, — Центрти Китайа тапăнса кĕчĕ тата Шанхайа оккупацилерĕ. Йапони çарĕсем Центрти Китайа тапăнса кĕресси темиçе çул кайăла Манчжурине тапăнса кĕнĕ пекех, Йапониле меслетпе, урăхла каласан, вăрăлла майпа, йапонцăсем хăйсемех тунă тĕрлĕрен „вырăнти инцидентсем“ пирки мошенникла чăкăлташнисем урлă тата пур пек, пур йышши „пĕтĕм тĕнчери нормăсене“, догăвăрсене, килĕшӳсене тата ыттисене ĕçре пăсни урлă пулса тăнă. Таңцзинпа Шанхайа туртса илни питĕ пысăк рынăклă Китайпа суту-илӳ тумали çăрауççине Йапони аллине пачĕ. Ку ĕнтĕ Йапони Шанхайпа Таңцзина хăй аллинче тытса тăнă чухне Центрти Китайран унта питех те нумай укçа-тенкĕ хывнă Англиче тата Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене кирек хăш вăхăтра та кăларса ывăтма пултарнине пĕлтерет.

Паллах, Китай халăхĕпе унăн çарĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешни, Китайра нацилĕ йухăм пысăккăн çĕкленни, Китайра çынсемпе территори йенчен питех те пысăк резервсем пурри, йулашкинчен, Китайри нацилĕ правителствă Китай халăх ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕве вĕçне çитересси шĕн, захватчиксене Китай çĕршывĕнчен пĕтĕмпех хăваласа кăларассишĕн хатĕр тăни — çаксем пурте вĕсем, иккĕленмеле мар, Йапони империалисĕсен Китайра малашлăх çукки тата пулма та пултарайманни çинчен калаççĕ.

Анчах тата çакă та тĕрĕс: Йапони халлĕхе Китайпа суту-илӳ тумали çăрауççине хăй аллинче тытат, вăл Китайа хирĕç вăрçни, тĕрĕссипе илсен, Англин тата Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен интересĕсем çине хыттăнах çапни пулат.

Çапла ĕнтĕ, Великий океан çинче, Китай районĕнче, тата тепĕр вăрçă тĕвви çыхăнчĕ.

Çак фактсем пурте иккĕмĕш империалисăмлă вăрçă чăннипе ĕнтĕ пуçланнине кăтартаççĕ. Вăл вăрттăн, вăрçассине пĕлтермесĕр пуçланчĕ. Государствăсемпе халăхсем иккĕмĕш империалисăмлă вăрçă орбитине темĕнле сисмесĕрех шуса кĕчĕç. Вăрçăна тĕнчен тĕрлĕ йенĕсенче виçĕ агреççивлă государствăн — Германин, Италин, Йапонин влаçа тытса пыракан фашисла ушкăнĕсем пуçласа йачĕç. Вăрçă калама çук пысăк çĕр талкăшĕ çинче, Гибралтартан тытăнса Шанхая таранах пырат. Вăрçă хăйĕн орбитине ĕнтĕ çур мĕлйард ытла халăха туртса кĕртме ĕлкерчĕ. Вăл, йулашки шутран, Англи, Франци, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен капиталисла интересĕсене хирĕç пырат, мĕншĕн тесен вăл агреççивлă çĕршывсемшĕн усăллă туса, демократилĕ текен государствăсен шучĕпе тĕнчене тата влийани сферисене тепĕр хут валеçес тĕллеве тытат.

Иккĕмĕш империалисăмлă вăрçăн уйрăмлăхĕ халлĕхе акă мĕнре: вăрçăна агреççивлă державăсем туса тата вăйлатса пыраççĕ, çав вăхăтрах ытти державăсем, „демократилĕ“ державăсем, тĕрĕссипе каласан, вăрçă хăйсене хирĕç пырат пулин те хăйсене хăйсем вăрçă вĕсене пырса тĕкĕнмест пек тыткалаççĕ, аллисене çаваççĕ, кайала чакаççĕ, хăйсем мире йуратнине мухтаççĕ, фашисла агрессăрсене йатлаççĕ тата... пĕчĕккĕнпĕчĕккĕнех хăйсен позицийĕсене агрессăрсене параççĕ, çав вăхăтрах, епĕр отпор пама хатĕрленетпĕр тесе ĕнентерме хăтланаççĕ.

Курăнат ĕнтĕ, ку вăрçă ытла та темĕнле тата пĕр йенлĕ характĕрлă. Анчах çапла пулин йна хăйар тата чăрсăрла-туртса илмеле вăрçă. Абиççини, Испани, Китай халăхĕсен çурăмĕсем çинче пулса пыракан вăрçă пулма чармаст.

Вăрçă çавăн пек пĕр йенлĕ характĕрлă пулнине „демократилĕ“ государствăсен çар йе економикă вăйсăрлăхĕпе ăнлантарни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. „Демократилĕ“ государствăсем, паллах, фашисла государствăсенчен вăйларах. Сарăлса пыракан тĕнче вăрçин пĕр йенлĕ характĕрĕ „демократилĕ“ государствăсен фашисла державăсене хирĕç пĕрлĕх фрончĕ пулманнинчен килет. „Демократилĕ“ текен государствăсем, паллах, фашисла государствăсем „ытлашши“ хăтланнисене ырламаççĕ тата вĕсем вăйланассинчен хăраççĕ. Анчах вĕсем тата та ытларах — Йевропăри рабочисен йухăмĕнчен тата Азири нацилĕ-ирĕклĕ йухăмран хăраççĕ, вĕсем: фашисăм çак мĕнпур „хăрушă“ йухăмсене хирĕç „аван наркăмăш“ пулса тăрат, тесе шутлаççĕ. Çавăнпа та „демократилĕ“ государствăсен влаçа тытса пыракан ушкăнĕсем, уйрăмăнах Англири влаçа тытса пыракан консерватиллă ушкăнсем, фашиссен иртĕхсе кайнă пуçлăхĕсене „ĕçе вĕçне çитийех тарăна йарас марччĕ“, тесе ӳкĕтлекен политикăпах çырлахаççĕ, çав вăхăтрах хăйсем, вĕсен рабочисен йухăмĕпе нацилĕ-ирĕклĕ йухăма хирĕçле реакцилĕ-полицейла политикине, тĕпрен илсен, „питех те ăнланни“ тата унăн майлă тăни çинчен систереççĕ. Англири влаçа тытса пыракан ушкăнсем кунта вырăссен либераллă-монархисла буржуасем патша йĕрки вăхăтĕнче тытнă политикă йеверлĕ политикă тытаççĕ. Либераллă-монархисла буржуасем патша йĕркин „ытлашши иртĕхнĕ“ политикинчен хăранă, анчах вĕсем халăхран тата ытларах хăранă, çакна кура вĕсем патшана ӳкĕтлес политикă çине — çапла вара, халăха хирĕç патшапа каварлашу тăвас политикă çине куçнă. Паллă ĕнтĕ, Российари либераллă-монархисла буржуази çавăн пек иккĕлле политикăшăн хăйар тавӳру туйанчĕ. Англири влаçа тытса пыракан ушкăнсемпе вĕсен Францири тата США-ри тусĕсем те хăйсен историлĕ тавăруне туйанĕç теме пулат.

Ăнланмалах ĕнтĕ, ССРС, тĕнчери ĕçсем çакăн пек килсе тухнине кура, çав хăйар событисем патĕнчен иртсе кайма пултарайман. Агрессăрсем пуçласа йанă кирек менле вăрçă та, пысăккăх мар пулсан та, мире йуратакан çĕршывсемшĕн хăрушлăх пулса тăрат, иккĕмĕш империалисăмла вăрçă, халăхсем патне „сисмесĕрех“ çитсе тăнă тата çур мĕлйард ытла халăха çавăрса илнĕ вăрçă пушшех те пур халăхсемшĕн те, тата, чи малтан, ССРС-шĕн пысăк хăрушлăх пулмасăр тăма пултараймаст. Çакăн çинчен Германи, Итали тата Йапони хушшинче „Коммунисăма хирĕçле блок“ туни аван каласа парат. Çавăнпа та пирĕн çĕршыв, хăйĕн мирлĕ политикине тытса пынипе пĕрлех, хамăр чикĕсен оборонă пултарулăхне тата Хĕрлĕ çарпа Хĕрлĕ флотăн çапăçу хăватне малала вăйлатса йачĕ. 1934 çулăн вĕçĕнче ССРС Лигă Нацине кĕчĕ; ССРС Лигă Нацине, вăл вăйсăр пулсан та, çапах та вăл агрессăрсене тăрă шыв çине кăлармали вырăн пулма пултарассине, тата вăйсăр та пулсан, вăрçă пуçланса кайасран пăртаккăх чăрмантарса тăракан мир инструменчĕ пулассине пĕлсе кĕчĕ. ССРС çакăн пек вăхăтра Лигă Наци пек тĕнчери вăйсăр организацине те хисепе илмесĕр тăмала мар, тесе шутланă. 1935 çулти май уйăхĕнче Францип ССРС хушшинче агрессăрсем тапăнма пултарассине хирĕç пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен догăвăр тунă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах çакăн пек догăвăр тата Чехословакипе тунă. 1936 çулти март уйăхĕнче пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен ССРС Монголи Халăх Республикипе догăвăр турĕ. 1937 çулти август уйăхĕнче пĕр-пĕрне тапăнмала марри çинчен ССР Сойузĕпе Китай республикĕ хушшинче догăвăр тунă.

2. ССР Сойузĕнче промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ малала çĕкленсе пыни. Иккĕмĕш пилĕкçуллăха срукчен тултарни. Йалхуçалăхне реконструкцилени тата коллективизаци туса çитерни. Кадрсен пĕлтерĕшĕ. Стаханăвла йухăм. Халăх пурнăçĕ лайăхланни. Халăх куљтури çĕкленни. Совет revoљуцийĕн вăйĕ.

Капиталисăмла çĕршывсенче 1930—1933 çулсенчи економикăла кризис хыççăн тепĕр виçĕ çултан çĕнĕ економикăла кризис пуçланнă вăхăтра, ССРС-че çав пĕтĕм тапхăр тăрăшĕнче промышлĕннăç пĕр чарăнмасăр çĕкленсе пынă. Тĕнчери капиталисăмла промышлĕннăç пĕтĕмĕшпе 1937 çулăн вăтă çĕрĕ тĕлне 1929 çулти хисепе аран 95—96 процента çитсе 1937 çулăн иккĕмĕш çурма çулĕнче çĕнĕ економикăлă кризис тапхăрне кĕчĕ пулсан, ССРС промышлĕннăçĕ хăйĕн ӳссе пыракан çĕкленĕвĕнче 1937 çулăн вĕçĕ тĕлне 1929 çулти хисепрен 428 процента çитнĕ, вăрçăченхипе танлаштарсан çичĕ хут ытла ӳснĕ.

Çак çитĕнӳсем пĕтĕмĕшпех партипе правителствă реконструкци политикине çине тăрса пурнăçа кĕртсе пынипе пулнă.

Çак çитĕнӳсене тунипе промышлĕннăç тăрăх иккĕмĕш пилĕкçуллăх плана срукчен тултарнă. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх плана 1937 çулти апрелĕн 1-мĕш тĕлне, урăхла каласан, 4 çул та 3 уйăхра тултарнă.

Ку вăл социалисăмăн пысăкран та пысăк çĕнтерĕвĕ пулнă.

Йалхуçалăхĕнчи çĕкленӳ картини те çавнă майлах пулнă. Пĕтĕм куљтурăсем акăнакан çĕр лаптăкĕ 1913 çулта (вăрçăченхи вăхăт) 105 мĕлйун гектар пулнинчен 1937 çулта 135 мĕлйун гектара çити ӳснĕ. Тĕштырă туса илесси 1913 çулта 4 мĕлйард та 800 мĕлйун пăт пулнинчен 1937 çулта 6 мĕлйард та 800 мĕлйун пăт таран ӳснĕ, çĕрмамăк туса илесси 44 мĕлйун пăтран — 154 мĕлйун пăт таран, йĕтĕн (сӳс) туса илесси 19 мĕлйун пăтран 31 мĕлйун пăт таран, сахăр кăшманĕ лартса тăвасси 654 мĕлйун пăтран 1 мĕлйард та 311 мĕлйун пăт таран, çу калакан куљтурăсем тăвасси 129 мĕлйун пăтран — 306 мĕлйун пăт таран ӳснĕ.

Çакна палăртса хăварма кирлĕ, пĕр колхозсем кăна (совхозсемсĕр пуçне) 1937 çулта çĕршыва сутлăх тырă 1 мĕлйард та 700 мĕлйун пăт, урăхла каласан, 1913 çулта помешчиксем, кулаксем тата хресчейсем пурте пĕрле панинчен сахалтан та 400 мĕлйун пăт ытларах панă.

Йалхуçалăхĕн пĕр отраçли анчах — выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç — вăрçăченхи виçерен çаплах кайа йулса пынă, вăл малала та çаплах вăрахланнă хăвартлăхсемпе кайса пынă.

Йалхуçалăхне коллективизацилессине илсен, ăна ĕнтĕ туса çитернĕ тесе шутлама йурат. Колхозсенче 1937 çулта 18 мĕлйун çурă хресчен хуçалăхĕ пулнă, вăл мĕнпур хресченсен хуçалахĕсенчен 93 процент пулат, колхозсен тĕштырă акмали çĕр лаптăкĕ пĕтĕм хресченсен тĕштыра акмали çĕр лаптăкĕнчен 99 проценчĕ пулнă.

Йалхуçалăхне реконструкцилесин тата ăна трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсем вăйлăн парса тăнин ырлăхĕсем куç умĕнчех.

Промышлĕннăçпа йалхуçалăхне реконструкцилесе çитерни халăх хуçалăхне первокласнăй техникăпа тулăхлăн хĕçпăшаллантарчĕ. Промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ, транспăрт тата çар питĕ нумай çĕнĕ техникă, çĕнĕ машинсемпе станоксем, трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсем, пăравуссемпе пăрахутсем, артиллерипе танксем, самољотсемпе тинĕс-çар карапĕсем туйанчĕç. Çак пĕтĕм техникăна йĕнерлеме пултаракан тата унтан мĕн илме май пуррине пĕтĕмпех илме пултаракан вуншар тата çĕршер пин вĕрентсе хатĕрленĕ кадрсене ĕçе тăратма кирлĕ пулнă. Çакăнсăр, техникăна вĕренсе алла илнĕ çынсем çителĕклĕ таран пулмасăр, техникă — уса курмасăр выртакан вилĕ тимĕр-тăмăр купи пулса тăма пултарнă. Ку вăл — техникăна йĕнерлеме пултаракан кадрсен ӳсĕмĕ техникă ӳсĕмĕпе тан ĕлкĕрсе пыраймаснинчен тата вăл унтан инçете йулса пынинчен тухса тăнă пысăк хăрушлăх пулнă. Ĕç тата акă мĕн пирки йăвăрланнă: пирĕн работниксенчен чылай пысăк пайĕ çав хăрушлăха ăнланса илеймен, техникă хăй ĕçне «хăйех тăват» тесе шутланă. Кунтан маларах техникăна çителĕклĕ хак паман пулсан тата ун çине йĕрĕнсе пăхнă пулсан, халь ĕнтĕ ăна ытлашши хаклама пуçланă, унтан фетиш туса хунă. Техникăна вĕренсе алла илнĕ çынсемсĕр техникă вăл вилĕ йапала пулнине ăнланман. Техникăна вĕренсе алла илнĕ çынсем ĕçленĕ чухне çеç техникă чи пысăк ĕç тухăçлăхĕ пама пултарнине ăнланман.

Техникăна вĕренсе алла илнĕ кадрсем çинчен тăракан ыйту, çапла вара, чи кирлĕ ыйту пулса тăнă.

Пирĕн работниксен тимлĕхне вĕсем техникă йенне ытлашши çавăрăнса ӳкниччен, кадрсене çителĕклĕ хак паманнинчен техникăпа уса курма пĕлесси йенне, техникăна вĕренсе алла илесси йенне, техникăна йĕнерлеме тата унтан вăл пама пултаракан еффекта пĕтĕмпех илме пултаракан нумай йышлă кадрсем пăхса ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлессине пур майсемпе те вăйлатасси йенне çавăрма кирлĕ пулнă.

Халиччен, реконструкци тапхăрĕн пуçламăшĕнче, çĕршывра техникă тĕлĕшпе выçлăх сисĕннĕ вăхăтра парти: „реконструкци тапхăрĕнче пур ĕçе те техникă татса парат“ текен лозунг панă пулсан, халĕ ĕнтĕ, техникă çителĕклĕ нумай пулнă чухне, тĕпрен илсен, реконструкци тапхăрне вĕçлесе çитернĕ хыççăн, çĕршывра кадрсем çителĕксĕрри хытăн сисĕнсе тăнă вăхăтра, — партин çĕнĕ лозунг, халĕ ĕнтĕ тимлĕхе техникă çине мар, техникăпа туллин уса курма пултаракан çынсем çине, кадрсем çине пăхтаракан çĕнĕ лозунг памала пулнă.

Ку тĕлĕшпе Сталин йулташ Хĕрлĕ çар академикĕсене вĕрентсе кăларнă чухне 1935 çулти май уйăхĕнче тухса калани пысăк вырăн йышăнса тăнă.

„Халиччен епĕр, — тенĕ Сталин йулташ — „пур ĕçе те техникă татса парат“ теттĕмĕр. Çак лозунг пире акă хăш йенчен пулăшрĕ: епĕр техникă тĕлĕшĕнчен пулнă выçлăха пĕтертĕмĕр тата хамăр çынсене чи вăйлă техникăпа хĕçпăшаллантарма ĕçĕн пур отрăçлисенче те çав тери сарлака техникăла никĕс туса хутăмăр. Ку пит те аван. Анчах ку питĕ, питех те çителĕксĕр. Техникăна хускатса йарса унпа тĕппипех уса курмашкăн, техникăна вĕренсе алла илнĕ, çав техникăна пĕлсе искусствăн пур правилисем тăрăх та унпа уса курма пултаракан кадрсем кирлĕ. Техникăна алла илнĕ çынсемсĕр техникă вăл вилĕ йапала. Техникăна вĕренсе алла илнĕ çынсем йертсе пыраççĕ пулсан, техникă тĕлĕнмеле хăватлă ĕçсем тума пултарат, тума та тивĕçлĕ. Пирĕн первокласнăй савăтсемпе хаврăксенче, пирĕн совхозсемпе колхозсенче, пирĕн Хĕрлĕ çарта çав техникăна йĕнерлеме пултаракан кадрсем çителĕклĕ пулас пулсан пирĕн çĕршыв халљхинчен икĕ хут, тăватă хут ытларах еффект илнĕ пулĕччĕ. Акă мĕншĕн халĕ техникăна вĕренсе ала илнĕ çынсем çине, кадрсем çине, работниксем çине ытларах пăхмала. Акă мĕншĕн „пур ĕçе те техникă татса парат“ текен кивĕ лозунга техникă тĕлĕшĕнчен выçлăх пулнă тапхăра тивĕçлĕ лозунга çĕнĕ лозунгпа, „пур ĕçе те кадрсем татса параççĕ“ текен лозунгпа улăштармала пирĕн. Çакăнта халĕ чи кирли...

Йулашкинчен, çакна ăнланас пулат: тĕнчере пур пек пур хаклă капиталсенчен те чи хакли тата ĕçе татса паракан капитал, çынсем, кадрсем пулаççĕ. Ăнланас пулат, пирĕн халљхи условисенче „пур ĕçе те кадрсем татса параççĕ“. Пирĕн промышлĕннăçра, йалхуçалăхĕнче, транспăртра, çарта лайăх тата нумай йышлă кадрсем пулсан — пирĕн çĕршыв никам çĕнтерейми çĕршыв пулат. Пирĕн çавăн пек кадрсем пулмасан — икĕ урапах ухсахлăпăр“.

Çапла ĕнтĕ, ĕç тухăçлăхне малала хăпартса пырас шутпа техникă кадрĕсене васкавлăн çитĕнтерсе пырасси тата çĕнĕ техникăна хăвăрттăн вĕренесси — малта тăракан залач пулса тăнă.

Çавăн пек кадрсен ӳсĕмне пуринчен ытларах уççăн кăтартса тăракан тĕслĕх, пирĕн çынсем çĕнĕ техникăна пĕлсе çитнине тата ĕç тухăçлăхĕ малала ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕх — стаханăвла йухăм пулса тăчĕ. Вăл Донбассра, çĕркăмрăк промышлĕннăçĕнче çуралса тухса сарăлчĕ, промышлĕннăçăн ытти отрăçлисене куçрĕ, транспăрт çинче сарăлчĕ, кайран йалхуçалăхне çаварса илчĕ. Çак йухăма ăна пуçарса йаракан «Центральное Ирмино» (Донбасс) шахтинчи забойщик Алексей Стаханăв йачĕпе стаханăвла йухăм тесе йат панă. Стаханăвчченех, Никита Изотăв çĕркăмрăк кăларас ĕçре уйччен курман рекордсем кăтартнă. Стаханăв 1935 çулти августăн 31-мĕшĕнче пĕр сменă хушшинче 102 тоннă çĕркăмрăк катса кăларнă, çапла майпа çĕркăмрăк кăларас ĕçре йалanхи нормăран 14 хут ирттернĕ. Тĕслĕх рабочисемпе колхозниксен ĕç нормине хăпартассишĕн, ĕç тухăçлăхĕн çĕнĕ ӳсĕмĕшĕн пыракан массăллă йухăмне пуçласа йачĕ. Автопромышлĕннăçра — Бусыгин, атăпушмак промышлĕннăçĕнче — Сметанин, транспăрт çинче — Кривонос, вăрман промышлĕннăçĕнче — Мусинский, пир-авăр промышлĕннăçĕнче — Йевдокийăпа Марийа Виноградăвăсем, йалхуçалăхĕнче — Марийа Демченко, Марина Гнатенко, П. Ангелина, Полагутин, Колесов, Борин, Ковардак — çакăн пек ĕнтĕ стаханăвла йухăмри пирвайхи пионерсен йачĕсем.

Вĕсем хыççăн ытти пионерсем, пионерсен отрйачĕсем кайрĕç, вĕсем малтанхи пионерсен ĕçтухăçлăхĕнчен те иртерчĕç.

Стаханăвла йухăма вăйлатса пырас ĕçре 1935 çулти нойабĕрте, Кремĕлре, пулса иртнĕ стаханăвецсен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕ тата унта Сталин йулташ тухса калани питех те пысăк вырăнта тăнă.

«Стаханăвла йухăм, — тенĕ Сталин йулташ хăй тухса каланинче, — социалисăмла ăмăртăвăн çĕнĕ çĕкленĕвне, социалисăмла ăмăртăвăн çĕнĕ, çӳлти етапне кăтартат... Иртнĕ вăхăтра, пĕр виçĕ çул кайала, социалисăмла ăмăртăвăн пĕрремĕш етапĕ тапхăрĕнче, социалисăмла ăмăрту çĕнĕ техникăпа çыхăнасси обйазатĕлнах пулман. Унчухне тата, тĕрĕсрех каласан, пирĕн çĕнĕ техникă та пулманпа пĕрех пулнă. Социалисăмла ăмăртăвăн халљхи етапĕ вара — стаханăвла йухăм, йăлтах урăхла, — вăл обйазатĕлнă çĕнĕ техникăпа çыхăннă. Çĕнĕ, çӳлĕ техникăсăр стаханăвла йухăм çинчен шухăшламали те пулас çукчĕ. Сирĕн умра Стаханăв, Бусыгин, Сметанин,

(Малалли 3-мĕш страницăра)

„ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн“ XI-мĕш сыпăкĕн вĕçĕ „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче тухнă 273-мĕш номĕрте пичетленнĕ.

МАЛАЛИ

Кривонос, Виноградăвăсем тата ытти нумай йулташсем пек ҫынсем, ҫӗнӗ ҫынсем, хăйсен ӗҫӗн техникине пӗтӗмӗшпех алла илнӗ, ăна йӗнерленӗ, малала хăвалакă рабочисемпе работницăсем. Ун пек ҫынсем пирӗн пӗр виҫӗ ҫул кайала пулман йе пулманпа пӗрех... Стаханăвла йухăмăн пӗлтерӗшӗ акă мӗнре: вăл кивӗ техникăлă нормăсене, вӗсем ҫителӗксӗр пирки, ҫӗмӗрет, чылай чухне малта пыракан капиталисăмла ҫӗршывсенчи ӗҫ тухăҫлăхӗнчен иртсе кайать, ҫапла вара, хамăр ҫӗршывра социалисăма малашне ҫирӗплетсе пыма практикăлă май, хамăр ҫӗршыва чи ытла пуйантарах ҫӗршыв туса хума май уҫса парать». Стаханăвӗцсен ӗҫ меслечӗсене характеристикă парса тата стаханăвла йухăмăн пӗлтерӗшӗ пирӗн ҫӗршывăн малашлăхӗшӗн питӗ пысăк пулнине уҫса кăтартса, Сталин йулташ малала ҫапла каланă:

„Стаханăвӗц йултăшсем ҫине сăнарах пăхăр-ха. Мӗнле ҫынсем-ха вӗсем? Вӗсем, пуринчен ытла,—ҫамрăк йе вăтам ҫулти рабочисемпе работницăсем, культурăлă тата техникă тӗлӗшӗнчен такăнланнă ҫынсем, ӗҫре ҫыпҫуланăпа йӗркелӗх тӗслӗхӗсене паракан, ӗҫре вăхăт фактăрне хакламе пӗлекен, вăхăта минутсем тăрăх ҫеҫ мар, секундсем тăрăх та шутлама вӗреннӗ ҫынсем. Вӗсенчен нумайӗшӗ техникăлă минимум теккеннине вӗреннӗ тата хăйсен техникăлă пӗлӗвӗсене малала ӳстерсе пыраççӗ. Вӗсем хăшпӗр инженерсен, техниксен тата хоҫайственниксен консерватисăмӗнчен тата пӗр вырăнта тăрассинчен ирӗклӗ, вӗсем кивелнӗ техникăлă нормăсене ҫӗмӗрсе, ҫӗнӗ тата ҫӳлерех нормăсем туса, хайулăн малала пыраççӗ, вӗсем пирӗн промышленнăç руководителӗсем палăртнă проектлă пултарулăхсемпе хуҫалăх планӗсене тӳрлетӳсем кӗртеççӗ, вӗсем час-часах инженерсемпе техниксем шутласа хунисем ҫумне хушса, тӳрлетсе пыраççӗ, вӗсем сайра хутра мар инженерсемпе техниксене вӗрентеççӗ тата малала тӗкеççӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем,—хăйсен ӗҫӗн техникине пӗтӗмӗшпех вӗренсе алла илнӗ, техникăран мӗн сăрхăнтарса илме май пуррине пӗтӗмпех илме пӗлекен ҫынсем. Пайанхи кун стаханăвӗцсем сахал-ха, анчах вӗсем ыран вунă хут ытларах пуласса кам иккӗленме пултарӗ? Паллă мар-и вара, стаханăвӗцсем пирӗн промышленнăçра новатăрсем пулни, стаханăвла йухăм пирӗн индустрин малашлăхӗ пулни, ун ăшӗнче рабочи клас малашне культурăпа техникă тӗлӗшӗнчен хăпарассин тӗшӗ пурри, вăл пире социалисăмран коммунисăма куҫма тата ăстăн ӗҫӗпе физически ӗҫ хушшинчи хирӗçлӗхсене пӗтерме кирлӗ ӗҫ тухăҫлăхӗн ҫӳлӗ виҫисене ҫитме ҫул уҫса пани?"

Стаханăвла йухăм саралса кайни тата иккӗмӗш пилӗкҫуллăха срукчен тултарни ӗççыннисен пурнăҫ ырлăхне тата культурăлă аталанăвне ҫӗнӗрен ҫӗклеме условисем туса пачӗҫ.

Рабочисемпе служăщисен реальнăй ӗçукçи иккӗмӗш пилӗкҫуллăх хушшинче икӗ хут ытла ӳсрӗ. Ӗç укçи фончӗ 1933 ҫулта 34 мӗлйард тенкӗлӗх пулнинчен 1937 ҫулта 81 мӗлйард тенкӗ таран ӳсрӗ. Государственнăй социальнăй страховани фончӗ 1933 ҫулта 4 мӗлйард та 600 мӗлйун тенкӗлӗх пулнинчен 1937 ҫулта 5 мӗлйард та 600 мӗлйун тенкӗ таран ӳсрӗ. Рабочисемпе служăщисен государственнăй страховани ӗҫне, вӗсен пурнăҫӗпе культурă ӗҫӗсене лайăхлатма, санаторисене, курортсене, канмали ҫуртсене тата медицинă пулăшу ӗҫне пӗр 1937 ҫулта кăна 10 мӗлйард тенке йахăн расхут тухнă.

Йалта татăкланах колхоз стройӗ ҫирӗпленчӗ. Ку ӗҫе 1935 ҫулти февральте колхозник-ударниксен 2-мӗш сйесӗнче йышăннă йалхуҫалăх ертелӗн уставӗ тата колхозсем ҫумне хăйсем ӗҫлесе тăракан пӗтӗм ҫӗре ӗмӗрлӗхе усă курма ҫирӗплетни вăйлăн пулăшрӗ. Колхоз стройӗ ҫирӗпленнине пула йалта чухăнлăх тата ҫитмен пурнăç пӗтрӗ. Халиччен, пӗр виҫӗ ҫул кайарах, ӗҫкунӗ пуçне пӗрер, икшер килограм тӗштырă панă пулсан, халӗ ӗнтӗ, тырă акса тăвакан районсенче, колхозниксенчен ытларахăшӗ ӗҫкунӗ пуçне пиллӗкшер килограмран пуçласа вунникшер килограм таран, нумайӗшӗ тата ӗҫкунӗ пуçне ҫирӗмшер килограм таран илме пуçларӗҫ, ытти продуктăсем пани тата укҫан тупăш илни ҫинчен каламасăр та. Тырă акса тăвакан районсенче ҫулталăк хушшинче 500 пăтран пуҫласа 1500 пăт таран тырă илекен, ҫӗрмамăк, чӗкӗнтӗр, йӗтӗн акса тăвакан, выльăх-чӗрлӗх ӗрчетекен, ерех, цитрус, пахча-ҫимӗҫ тăвакан районсенче ҫулталăкне вуншар пин тенкӗ тупăш илнӗ колхоз килӗсем мӗлйуншарăн пулса тăчӗҫ. Колхозсем пуйан пурнăҫлă пулса тăчӗҫ. Ҫӗнӗ амбарсемпе кладовойсем тăвасси колхозник килӗшӗн чи кирлӗ ӗҫ пулса тăчӗ, мӗншӗн тесен, продуктăсене усрамали кивӗ вырăнсем, ҫулталăк хушшинче хатӗрленӗ сахал запассене усрамалăх ҫеҫ тунăскерсем, колхозниксене кирлинчен вуннăмӗш пайне те ҫырлахтарайман.

1936 ҫулта, халăх массисен пурнăҫӗ лайăхланнă май, правительства абортсем тума чарасси ҫинчен саккун кăларчӗ. Пӗр вăхăтрах ача ҫуратмали ҫуртсем, йаслӗсем, сӗт кухнисем, ача сачӗсем тума пысăк программă палăртса хунă. 1936 ҫулта ҫав ӗҫсене тума 2 мӗлйард та 174 мӗлйун тенкӗ панă, 1935 ҫулта 875 мӗлйун тенкӗ пана пулнă. Уйрăм саккун кăларса нумай ачалă ҫемйесене чылайах пысăк пулăшу памала тунă. Ҫак саккун тăрăх 1937 ҫулта мӗлйард тенкӗлӗх ытла пособи панă.

Пурине те обйазательнă йӗркепе вӗрентмеле тунă тата ҫӗнӗ шкул строительстви сарса йанă май халăх массисен культурлăхӗ хăвăтлăн ҫӗкленчӗ. Пӗтӗм ҫӗршыв тăрăх ҫӗнӗ шкул строительстви питӗ пысăккăн саралса кайрӗ. Пуҫламӗшпе вăтам шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ 1914 ҫулта 8 мӗлйун ҫын пулнинчен 1936—37 ҫулсенче 28 мӗлйун ҫын таран ӳснӗ. Аслă шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ 1914 ҫулта 112 пин ҫын пулнинчен 1936—37 ҫулсенче 542 пин ҫын таран ӳснӗ.

Ку вăл культурăлă революци пулнă.

Халăх массисен материальнăй пурнăҫӗ тата культурлă аталанăвӗ ҫӗкленнинче пирӗн совет революцийӗн вăйӗ, хăвачӗ, вăл никам ҫӗнейми пулни курăнчӗ. Иртнӗ вăхăтсенчи революцисем вӗсем, халăха ирӗклӗх панипе пӗрлех, халăхăн материальнăй тата культурăлă пурнăҫне пысăккăнах лайăхлатма вӗсен май пулман пирки пӗтсе ларнă. Ҫакăнта пулнă вӗсен тӗп вайсăрлăхӗ. Пирӗн революци ытти мӗнпур революцисенчен ҫакăнпа уйрăлса тăрать: вăл халăха патша йӗркинчен, капиталисăмран ирӗке кăларчӗ ҫеҫ мар, тата унăн материальнăй тата культурăлă пурнăҫне те тӗпрен лайăхлатрӗ. Ҫакăнта унăн вайӗ тата никам ҫӗнеймелӗхӗ.

„Пирӗн пролетарилӗ революци,—тенӗ Сталин йулташ стаханăвӗцсен пӗтӗм Сойузри пӗрремӗш канашлăвӗнче тухса каланă сăмахӗнче,—халăха хăйӗн политикăлă результачӗсене кăна мар тата материальнăй результачӗсене те кăтартма пултарнă тӗнчери пӗртен-пӗр революци пулса тăрать. Пур рабочи революцисенчен влаҫа аран-аран илме пултарнă пӗр революцине кăна пӗлетпӗр епӗр. Вăл—Париж Коммунӗ. Анчах вăл нумайа пырайман. Вăл, чăнах та, капиталисăм сăнчăрӗсене ҫӗмӗрсе тăкма тытăнса пăхнă, анчах вăл вӗсене ҫӗмӗрсе тăкма ӗлкӗреймен, тата ытларах, вăл халăха революцин материальнăй ыррă результачӗсене кăтартма ӗлкӗреймен. Пирӗн революци капиталисăм сăнчăрӗсене ҫӗмӗрсе халăха ирӗк панă кăна мар, вăл тата пуйан пурнăҫ валли халăха материальнăй условисем туса пама ӗлкӗрнӗ пӗртен пӗр революци пулса тăрать. Ҫакăнта пирӗн революцин вайӗ тата никам ҫӗнеймевлӗхӗ».

(„ПСК(б)П исторйӗн Кӗске курсӗн" малали „Чăваш Коммунӗ" хаҫатăн ҫитес номӗрӗсенче пичетленет)

Колхозниксем пуйан та культурăлă пурăнаççӗ

ПАТĂРЙЕЛ. Кăҫалхи ҫул—тырпулсене ӳсме начар, уйар ҫанталăклă ҫул пулчӗ. Апла пулсан та, Хирти-Сӗнтӗр йалсоветне кӗрекен „Трактăр" колхоз агротехникăлă ӗçсене тӗрӗс пурнăҫа кӗртсе пынипе кăҫал, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, тырпул начарах мар туса илнӗ. Кăҫалхи ҫул колхозниксем ӗҫкунӗ тăрăх 4-шар килограм тӗштырă, 50 пусшар укҫа илеççӗ. Г. Иегорăв йулташ хăйӗн ҫемйипе 850 ӗҫкуне туса 312 пăт тӗштырă, 425 тенкӗ укçан илет.

Колхозниксем пуйан та культурăлă пурăнаҫпа пурăнаççӗ. Нумай колхозниксен пӳрчӗсенче патефонсемпе ҫӗвӗ ҫӗлемели машинăсем курма пулать.

Колхозри пуйан пурнăҫшăн ӗлӗк патша саманинче асапланса пурăннă старниксем савăнаççӗ. Вӗсем Сталин йулташа савăнăҫлă, культурăлă тата пуйан пурнăҫ туса панăшăн чӗререн тав тăваççӗ.

— «Спаҫибă Сталин йулташа пире телейлӗ пурăнăҫ туса панăшăн»—тет 65 ҫулхи колхозник Никитин йулташ.

В. Петров.

ПАРТИ ПУРНĂҪĔ

Харпăрхăй тӗллӗн вӗренме условисем туса памала

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ хăйӗн постановленийӗнче марксисăм-ленинисăма вӗренес ӗҫре харпăрхăй тӗллӗн вӗренесси тӗп меслет пулса тăрать, тесе кăтартса пачӗ. Маркс, Енгельс, Ленин, Сталин произведенийӗсене харпăрхăй тӗллӗн, куллен кун, тарăннăн вӗренсе пыни кирлӗ. Анчах вырăнсенче коммуниссене вӗренме условисем туса парасси ҫинчен пит сахал шутлаççӗ-ха. Хăшпӗр коммуниссен поручениссем ытлашши нумай пирки, вăхăт пухусемпе ларусене ҫӳресех иртет. Ку вăл пуринчен ытла поручениссене тӗрӗс уйăрса паманнинчен килет.

Епӗ халăхи вăхăтра Тракри МТС директăрӗн политикă йенӗпе ӗҫлекен заместителӗ пулса тăратăп. Ку—пит пысăк ӗҫ. Ҫавăнпа пӗрлех епӗ СВБ райсовечӗн председателӗ, Осоавиахим райсовет председателӗн заместителӗ, МТС-ри парторг заместителӗ, ПСК(б)П райком членӗ. Кунсăр пуҫне районри турăсăрсен заочнăй вӗренӳне йертсе пыма хушнă. Районра пурӗ 72 заочник, вӗсене вӗренӳре кирлӗ пулăшу парса пымала. МТС ҫумӗнче 80 ҫынран тракторисен курсне уҫрăмăр, курс заведуйущине те манах лартрӗҫ.

Ку ҫеҫ те мар, тата районри колхозсене кайса тӗрлӗ ыйтусем тăрăх докладсем туса памала пулать. Нойабӗр уйăхӗнче епӗ колхозсенче тăватă хут доклад турăм.

Ҫапла вара, марксисăм-ленинисăма тарăннăн вӗренес ӗç валли манăн пуша вăхăт йулмастьпе пӗрех.

Парти райкомӗн малашне ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерсе, пур коммуниссене те харпăрхăй тӗллӗн вӗренме условисем туса памала.

Г. Закамский.

ПСК(б)П Историне тӗплӗн вӗренесшӗн

Декабӗрӗн 1-мӗшӗнче Вăрнарта совет интеллигенции районри пухăвӗ пулса иртрӗ. Пухура учительсем, агрономсем, врачсем, бухгалтерсем, счетоводсем тата совет учрежденийӗсенчи ытти служăщисем пурӗ 340 ҫын пулчӗҫ.

Пухура ПСК(б)П Тӗпкомӗ „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" кăларнă май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" йышăннă постановлени ҫинчен доклад итлерӗҫ.

Пренире тухса каланă йулташсем ПСК(б)П Тӗпкомӗн постановленине пысăк хавасланса ырларӗç. Пӗтӗм тӗнчери пролетариатăн ҫулпуҫне аслă Сталин йулташа ПСК(б) Парти историйӗн Кӗске курсне—марксисăм-ленинисăм пӗлӗвӗсен енциклопедине туса панăшăн тата совет интеллигенцине тивӗҫлӗ хак парса ПСК(б)П историне вӗренме май туса панăшăн саламласа тав турӗҫ.

Пухура парти пропагандинче ку таранччен пулнă ҫитменлӗхсене те палăртрӗҫ.

Районри ҫӗрӗç пайӗнче ӗҫлекен гидротехник Ваҫилйӗв йулташ ҫапла каларӗ:

— Пире Совет влаҫӗ, аслă Сталин вӗрентсе ҫитӗнтерсе специалиссем турӗ. Епӗр большевикла партин идейăлă пурнăҫӗнчен нийепле те йулса пыма пултараймастпăр. Пире, специалиссене, хамăрăн тӗп ӗçе пӗлни ҫеҫ ҫителӗклӗ мар. Уйрăмăн, харпăрхăй тӗллӗн вӗренесси тӗп формă пулса тăнă вăхăтра тата „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" кăларнă хыççăн, марксисăм-ленинисăма вӗренме пӗтӗм тимлӗхпе тытăнăпăр.

— Ку таранччен,—тет учитель Шарабин,—коммуниссемпе комсомолӗцсене, учительсене ирӗксӗрлесе кружоксене ҫӳретнӗ. Ҫапла вӗренӳ пахалăхӗ пулман. Халь харпăрхăй тӗллӗн вӗренес ӗҫе уйăрмах вайлатмала ӗнтӗ. Учительсенчен чылайăшӗ парти историне вӗренме тытăннă. Парти райкомӗн вӗсене пулăшма лектăрсене чӗнмеле, консультаци ӗҫне лайăх йӗркелемеле.

— Марксисăм-ленинисăм теорипе хӗçпăшалланни,—тет зоотехник Блинов йулташ,—пирӗн большевикла сисӗмлӗхе ӳстерет. Ҫавăнпа марксисăм-ленинисăма пирӗн тăрăшса вӗренмеле. Епӗ,—тет вăл малала,—„ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗ" тăрăх вӗренме тытăнтăм.

Интеллигенци пухăвӗ доклад тăрăх пӗр сасăпа йышăннă резолюцире „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" кăларнă май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" ПСК(б)П Тӗпкомӗн постановленине пӗр кăмăлпа тата пысăк хаваслăхпа ырларӗ. ПСК(б)П райкомне совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорине харпăрхăй тӗллӗн вӗренес ӗҫре кирлӗ пек пулăшса пыма, пысăк квалификацилӗ лектăрсене чӗнсе лекцисем иртерме, квалификацилӗ пропагандиссен вăйӗпе лайăх консультаци организацилеме, парти кабинечӗн ӗҫне лайăхрах йӗркелеме, районри хаҫатра ыйтусем ҫине ответсем парассине организацилеме ыйтрӗ.

Е. Солкăв.

Тӗпком постановленине ырлаççӗ

ПАТĂРЙЕЛ. Коммуниссен районри пухăвӗ „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗ" тухнă май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" парти Тӗпкомӗ йышăннă постановленине пысăк интереспа сӳтсе-йаврӗ. Пуху парти Тӗпкомӗн постановленине пӗр шухăшпа ырларӗ.

Пухура тухса каланă коммуниссем парти пропаганди ӗҫӗнче районра пысăк ҫитменлӗхсем пуррине кăтартса пачӗҫ. Парти райкомӗпе парткабинет коммуниссемпе совет интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорийӗпе хӗçпăшаллантарас ӗçе йӗркелесе йаман. Ҫак ӗҫе ку таранчченех „реорганизаци тапхăрӗнче" тытса тăнă: пӗрре пӗр майлă кружоксем йӗркеленӗ, вара татах урăх йенӗрлӗ кружоксем организацилесе коммуниссене пӗр кружокран тепӗр кружока куҫарнă. Пропагандиссен ҫеминарӗсем йӗркелӗ пулмаççӗ.

Парти Тӗпкомӗ хăйӗн постановленинче партилӗ пропагандă ӗҫне пропагандиссем хатӗрлессинчен тытăнма кирлине кăтартса панă. Вăл ӗçе кунта тытăнман кăна мар, пропагандиссемпе урăх ӗҫре усă курас ҫул ҫине тăнă. Пропагандис Мышкин йулташа „Хӗрлӗ йалав" колхоза парторг пулса ӗҫлеме йанă. Петров пропагандиса Осоавиахим райсовечӗн председателӗ туса хунă. Ҫапла вара халӗ пропагандиссен кварӗсем ҫитмеççӗ, вӗсене кунта ҫӳлтен парасса шанма та хирӗҫ мар.

Ҫавнашкалах тухса калакансем йалсенчи тата район центрӗнчи интеллигенци хушшинче парти пропаганди ӗҫӗ вуҫех ҫуккине кăтартса пачӗҫ.

— Патăрйелӗнче пирӗн икӗ вăтам шкул, учительсем хушшинче пӗр коммунис та ҫук. Вӗсемпе никам та ӗçлемест,—тет Патăрйел йалсовечӗн председателӗ Шадирйакăв йулташ.

Совет интеллигенцийӗ ҫине большевисăма хирӗҫле, ҫӗрӗк шухăшпа пăхнине те кăтартса пачӗҫ тухса каланă йулташсем.

Ник. Пушкин.

Районри хаҫатсем тăрăх

** Кувакинă районӗнчи „Мартăн 8-мӗш" колхоз членӗ—Хасан кӳлли районӗнчи ҫапăҫусен участникӗ Храмăв йулташ тăван йалне таврăннă. Колхозниксене вăл Хасан кӳлли патӗнчи ҫапăҫусем ҫинчен каласа панă.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн указӗпе Храмăв йулташа «Хӗрлӗ йалав» орденӗ парса наградăланă. («Колхозная правда»).

** Правительствă нумай ача амăшӗсене пулăшу парасси ҫинчен саккун кăларнăранпа Хутар йалӗнче (Ҫӗмӗрлӗ р.) нумай ача амăшӗсем 16 пин тенкӗ государствăран пулăшу илнӗ. («Социалисăмлă ӗҫ»).

** Ҫӗмӗрлери перекет касси Иккӗмӗш Пилӗкҫуллăх (тăваттăмӗш ҫулхи кăларăм) зайомăн 9-мӗш тиражӗнче тухнă выигрăшсене пурӗ 4.082 тенкӗ тӳленӗ. («Социалисăмлă ӗҫ»).

** «Четай» тата «Шимар» колхозсем (Трак р.) Сурăм шывӗ ҫинче пысăк пӗве туса пӗтерне. Ҫитес кунсенчех динамо лартаççӗ. Електростанци 1.500 лампă ҫутатмала пулать. Кунсăр пуҫне пӗвере шыв хăпарнипе икӗ колхозăн уйхирне 100 гектар таран шăвармала тăваççӗ. («Коммунисăм ҫулӗпе»).

** Вăрманхӗрри Шăхальти (Турхан р.) «Осоавиахим» колхозра кăҫал ултă колхозник патефонсем туйанна. («Коммунар»).

** ЧАССР Верховнăй Совечӗн депутачӗ П. Григорйӗвă йулташ учителре ӗҫлеме тытăнни 32 ҫул тултарнă. Нумайранпа ӗнтӗ вăл Майшӳ (Шăхасан р.) йалӗнчи пуҫламӗш шкулăн пуҫлăхӗ пулса ӗҫлет. Ҫав шкулта ӗҫлеме пуҫланăранпа вăл 512 ача вӗрентсе кăларнă. («Вайлă тырпулшăн»).

Хуҫалăх ӗҫӗсем кайа йулнине хăвăрт пӗтермеле

ЙӖПРЕҪ, декабӗрӗн 8-мӗш. (Хамăр корр.). Пайан Йӗпреç районӗнчи коммуниссен пухăвӗ пулса иртрӗ. Пуху иркине 10 сехетре уҫăлас вырăнне 13 сехетре тин уҫăлчӗ. 159 коммунисран 105 ҫын кăна пухăва пынă. Хăшпӗр коммуниссем тăватă сехет кайа йулса ҫитрӗҫ. Пухура Чăваш Обкомӗн II-мӗш пленумӗн решенийӗсем ҫинчен ПСК(б)П райком секретарӗ Михайлăв йулташ доклад туса пачӗ.

Йӗпреç районӗ хуҫалăхла-политикăлă ӗҫсем йенӗпе республикăра кайра пырать. Декабӗрӗн 1-мӗш тӗлне государствăна тырă тăратас плана 98 процент, натурплатă—70,9 процент, ҫӗрулми парассине 75,5 процент, аш-какай парас плана 84 процент анчах тултарнă.

Район республикăра чи кайра пыракансенчен пӗри. 688 йединоличник хуҫалăхӗсем лашашăн хунă налога пӗр пус та тӳлемен. Суту-илӳ организацисем хăйсен планӗсене тултараймаççӗ. Растрата ӳссех пырать. 1938 ҫулти йанварӗн 1-мӗшӗпе октабӗрӗн 1-мӗшӗ хушшинче растрата 71 пин тенкӗ таран ӳснӗ. Ытти тӗрлӗ предприйатисем те хăйсен планӗсене тултарса пыраймаççӗ.

Ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем районра партилӗ-политикăлă ӗҫсене чăтма ҫук ҫителӗксӗр туса пынинчен килеççӗ.

Государствă умӗнчи парăмсене вăхăтра тӳлесе татассине хăшпӗр коммуниссем хăйсем чăрмантарса пыраççӗ. Акă, райпланра ӗҫлекен Лебедевăн килти хуҫалăхӗ самообложени укҫине 15 тенкӗ, страховкă 13 тенкӗ те 44 пус тӳлемен. МТС директăрӗн Константинăв йулташăн килти хуҫалăхӗ самообложени укҫине 15 тенкӗ, страховкă 5 тенкӗ те 88 пус тӳлемен. Ҫавăн пекех вăрманпромхоз директăрӗн Шипунов йулташăн килти хуҫалăхӗ те самообложени укҫине 15 тенкӗ тӳлемен.

Хăшпӗр йалсовет председателӗсем Уткин, Кладкин тата Павлăв йулташсем умра тăракан задачăсене пурнăҫа кӗртме, колхозниксене мобилизацилес вырăнне, ӗçсе ҫӳреççӗ, совет работникӗн йатне ҫӗртеççӗ.

Пренире 16 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем коммуниссем хушшинче дисциплинăна вайлатасси ҫинчен нумай чарăнса тăчӗҫ. Кашни коммунисăннах государствă умӗнчи обйазательствăсене вăхăтра тултарса, ыттисене пример кăтартмали ҫинчен каларӗҫ.

Пуху хăйӗн решенинче парти Обкомӗн II пленумӗн решенийӗсене предприйатисенче, учрежденисенче, колхозсенче сӳтсе-йавса, район кайра пынине пӗтерме пур ӗççыннисене те мобилизацилеме йышăнчӗ.

Г. Сахалкин.

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн пропагандă ҫинчен йышăннă постановленине пурнăҫа кӗртни

Партин Октабӗрский райкомӗ (Мускав) районри врачсен пысăк ушкăнӗ ыйтнине шута илсе, вӗсене валли диалектикă метачӗ ҫинчен лекци организациленӗ. Вăл лекцине врачсемпе медицинă работникӗсем пысăк интереспа итленӗ, мӗн пурӗ 250 ҫын пулнă. Ҫак питӗ анăҫлăн иртнӗ лекцине, районри интеллигенци ыйтнипе, икӗ кунран тата тепӗр хут туса иртернӗ. Иккӗмӗш хутӗнче вăл лекцине итлеме 500 ҫын ытла пухăннă.

* * *

Граждăнла сывлăш флочӗн политуправленин ҫумӗнчи парти пропагандипе агитаци пайӗ Мускав хулинчи аерофлотра ӗҫлекен партипе комсомол тата профсойуз активӗ валли ПСК(б)П историйӗ тăрăх лекцисем иртерет.

Малтанхи икӗ лекцине—„Марксисăм-ленинисăм теорине вӗренсе алла илесси ҫинчен" тата В. И. Ленинăн „Российăра капиталисăм аталанса пыни" кӗнеки ҫинчен пулнă лекцисене итлеме пин ҫынна ытла пăвăҫтарнă.

(ТАСС).

Хаҫатсене пăхса тухни вырăнне

Активсăр хаҫат

Хаҫатсенче парти пурнăҫне куллен ҫутатса пырасси ҫинчен ПСК(б)П Тӗпкомӗ 1938 ҫулти март уйăхӗнче уйрăм постановлени йышăннă. Ҫав постановленире кашни республикăри, крайри, облаҫри хаҫатсенче куллен тухса тăракан „Парти пурнăҫӗ" пайӗ пулмала, тенӗ. Ку постановлени облаҫри хаҫатсене ҫеҫ мар, районри хаҫатсене те тивет.

Йетӗрне районӗнчи „Колхозник йулташӗ" хаҫат 1938 ҫулта ийуль уйăхӗнчеппе парти пурнăҫӗ ҫинчен 5 материал ҫеҫ пичетленӗ. Вӗсенчен виççӗшӗ парти кружокӗсем ҫинчен, тепри—райком пленумӗ, пиллӗкмӗшӗ—районри парти пухăвӗ ҫинчен. Партин пуҫламӗш организацисем районра 28, вӗсенче 203 коммунис. Кунсăр пуҫне сочувствуйущисем, совет интеллигенцийӗ сахал мар. Районри хаҫат вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ҫутатса пымасть. Пилӗк уйăх хушшинче парти пурнăҫӗн ыйтăвӗпе хаҫатра пӗр умстатйа та тухман.

Хаҫат час-часах пысăк йăнăшсем тăвать. Ҫентабӗрӗн 28-мӗшӗнче хаҫатра Долгов йулташ статйине пичетлесе кăларнă. Статйара: районри учительсем валли парти историне вӗренме 16 кружок организациленӗ. Ку кружоксене пур учительсене те хутшăнтарнă... занятисем кашни уйăхрах виҫӗ хут 4-шер сехет хушши пулмала. Вӗренмели материалсене „Правда" хаҫатра пичетлесе кăларнă. Учительсен кружокӗсене ӗҫлеме пур майсене те туса панă, тенӗ.

Ку йăнăш, парти Тӗпкомӗн постановленине хирӗҫле статйа. Районра совет интеллигенци валли пӗр лекци те, пӗр консультаци те иртермен. Редакци шучӗпе ҫакă вăл учительсене парти историне вӗренме пур условисене те туса пани пулать мӗн.

Тепӗр факт. Нойабӗрӗн 12-мӗшӗнче комсомол райкомӗн политвӗренӳ пайӗ пуҫлăхӗн Тимофейӗв йулташăн статйине пичетленӗ. Статйара Степанăв пропагандис Кăташри парти историне вӗренекен кружок лайăх ӗҫлени ҫинчен мухтаса ҫырнă. Тӗрӗссипе ку кружокра 1938 ҫулта пӗр занятти те пулман. Кун ҫинчен редакцире ӗҫлекен Михайлăвпа Цветков йулташсем пӗлсе тăраççӗ пулсан та, тӗрӗс мар материала хаҫатра пичетлесе кăлараççӗ.

Ҫентабӗрӗн 6-мӗшӗнче М. Василйӗв призывникӗн „Хӗрлӗ ҫара илнӗшӗн савăнатăп" йатлă заметкинче политикăла пысăк йăнăш тунă. Кун пек йăнăшсене темӗн чухлех кăтартма пулать. Редакци ҫак йăнăшсене тӳрлетме шутламасть.

„Колхозник йулташӗ" редакцийӗ хаҫат ӗҫне парторгсене, пропагандиссене, агитатăрсене хутшăнтарман. Малтанхи вăхăтра хаҫата райком секретарӗсем, инструктăрсем ҫырса тăнă. Халӗ вӗсем те ҫырма пăрахнă. Редакцине кунне улт-ҫич ҫыру ҫеҫ килет. Ҫав вăхăтрах редакци елекҫӗсене пысăк ҫул панă. Ваҫили Токăрӗв елекҫӗ (Пушнар йалӗнчен) редакцин активлă корреспонденчӗ шутланса тăрать. 1938 ҫулта Токăрӗв редакцине 66 ҫыру ҫырнă. Вăл пур майсемпе те Пушнар колхоз председателӗ Димитрийӗв йулташ ҫинчен елек сарать. Йулашки вăхăтрах Токăрӗв елекҫӗ Димитрийӗв коммунис ҫинчен 8 ҫыру ҫырнă. Кашни ҫырура пекех вăл: Димитрийӗва суйлав вăхăтӗнче участкăри суйлав комиççи председательне тӗрӗс уйăрман тесе, темтепӗр каласа елекленӗ.

ПСК(б)П райкомӗ вырăна тухса тӗрӗслесен, Димитрийӗв йулташ айăпсăррине палăртнă.

Ҫав суйа корреспондент Токăрӗв колхозра кладовщик пулса ӗҫлесе колхоз пурлăхне ҫаратса пурăннăскер. Халӗ ăна кладовщикрен кăларнă. Унăн ашшӗ Николай Токăрӗв граждăн вăрçи вăхăтӗнче дезертир пулса пурăннă. Токăрӗвăн тăванӗсем те кулакла елементсем. Димитрийӗв коммунис ҫак кулакла елементсемпе сахал мар кӗрешнӗ. Токăрӗв тахçанах комсомолӗц сăн-пичӗ ҫухатнă пулин те, пайан кунччченех комсомол ретӗнче тăрать.

Редакципе типографи ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизаци мӗн пахат-ши? Кунта парторганизаци йачӗшӗн кăна, тӗрӗссипе кунта парторганизаци ҫук. 1938 ҫулти ийуль уйăхӗнчеппе пӗр пуху кăна пулнă. Партилӗ-политикăла ӗç ҫинчен каламали те ҫук. Кунта парторг пулнă йулташа халӗ Шупашкара куҫарнă, парторганизаци ӗçӗсене вăл райкома парса хăварнă. Ҫӗнӗ парторг суйламан-ха. Редакцинче нимӗнле дисциплинă та ҫук. Редактăр пулса ӗҫленӗ Петров виҫ-тăват кун хушши редакцине пырса курман. Парти райкомӗ те хăйӗн хаҫачӗ ҫине ҫавăрăнса пăхмасть.

Н.

Вăрман хатĕрлевĕ

Лайăх ĕçлекенсемпе танлашмала

ВĂРНАР. Вăрман хатĕрлес плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем районра сахал мар. Чăрăшкас Мăратри „11 лет Чувашии" колхозра республикăри вăрман ĕçĕнчи стахановецсен канашлăвĕ чĕнсе калавнине сӳтсе йавнă хыççăн 30 колхозник вăрмана ĕçлеме кайрĕç. Вĕсем 4-мĕш квартăл планне срукчен тултарса 1939 çулти плана йанварĕн 10-мĕшне тултарма пулаççĕ.

— Пирĕн колхоз вăрман хатĕрлев планне йаланах ытлашшипе тултарса пынă, 4-мĕш квартăл планне те срукченех тултаратпăр. Епĕр колхозникпа колхозник хушшинче социалисăмла ăмăртува, стахановла йухăма анлăн сарса йатăмăр. Вăрмантах пĕрлешӳлĕ апат организацилерĕмĕр, — тет колхоз председателĕ Иванов йулташ.

Çавăн пекех вăрманта Кӳлхĕрри, Анаткас Хапăс, Малтикас, Шуркасси, Упнер колхозĕсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах районра чылай колхозсем вăрманта ĕçлессине хаклаççĕ. Кăмашри Сталин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ квартăлсенче вăрман хатĕрлев планне срукчен тултарса пынă. Халĕ вăл çитĕвӳпе лăпланса ларчĕ, 4-мĕш квартăл планне пĕтĕмпе те 50 процент çеç тултарнă. Кивйахакасси, Санарпус, Павайалђ колхозĕсем те чăтма çук йапăх ĕçлесе пыраççĕ. Ку колхозсенчен декабĕрĕн 2-мĕш тĕлне пĕр çын та ĕçлеме тухман.

Вăрман хатĕрлев планне вăхăтра тултарас тĕлĕшпе вăрманпромхозĕ те ĕçе кирлĕ пек организацилемен-ха. Вăрманта лучковой пăчкăсем 100 штук пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ. Çавăн пекех моторлă пăчкăсем 3 штук ĕçлемеле, мотористсем çителĕклĕ хатĕрлеменнине пула вĕсенчен пĕри çеç ĕçлет. Ĕçлекенсем хушшинче кулђтмассăла ĕçе начар организациленĕ. Пилĕк колхозпа халĕ те договăр туман.

Н. Козлов.

Халех тумали ĕç

ШĂХАСАН. Вăрман хатĕрлеме ĕç вăйĕ мобилизацилесси районра питех те вăрах пырат. Нойабĕр уйăхĕн йулашки кунĕсенче районри колхозсенчен Вăрнар вăрманпромхозне унта ĕçлеме çирĕплетнĕ Вăрман Йенĕш йалсоветĕнчи колхозсенчен 23 çын, Уйкас Кипекрен 11, Йенĕш йалсоветĕнчен 15 çын çеç ĕçленĕ. Çавăн пекех Канашри вăрман участкинче те нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче пурĕ те 64 çын, декабĕрĕн 1—2-мĕшĕсенче 138 çын кăна ĕçленĕ. „Пинер", „Победа", „Активист" тата Молотов йачĕпе тăракан колхозсем анчах ĕç вăйĕ парас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ.

Троицк, Малти Антаваш, Шĕкĕр, Высоковка, Чалкасси т. ыт. йалсовечĕсенчи колхозсенчен ку таранччен пĕр çын та тухман.

Йединоличниксене вăрман хатĕрлес ĕçе хутшăнтарасси тата начар. Вăрман хатĕрлеме ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе халех татăклă ĕçсем тумала.

В. Чернов.

Плана ытлашшипех тултарнă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районти чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Келкассинчи „Самолђот" колхоз паллă вырăн йышăнса тăрат. Ку колхоз членĕсем плана тултарассишĕн вăрманта пĕр татăлмасăр ĕçлерĕç. Стахановла йухăма анлăн сарса пычĕç.

Колхоз 1938 çулти 4-мĕш квартăлшăн тата 1939 çулти 1, 2, 3-мĕш квартăлсемшĕн вăрман хатĕрлев планне 101 процент тултарчĕ.

И. Сигайĕв.

Инструментсем çитмеççĕ

Вăрмана ĕçлеме пыракансен хисепĕ ӳссех пырат. Анчах Кирери механизациленĕ вăрманпунктчĕ ĕçлеме пыракансене йышăнса илессиве организацилемен. Малтанхи кунсенчех инструментсем, хватерсем çитменни палăрчĕ. Пуррисем те йусавлă мар. Акă пăчкăсем, пĕтĕмĕшпе илсен, 40—60 процентчĕ йурăхсăра тухнă, хăшпĕр пăчкăсен 16-шар шăл çук, пуртăсене, лучковой пăчкăсене йусаса, хăйраса хатĕрлемен.

Суту-илӳ ĕçне те йĕркелемен. Ларйокра час-часах çăкăр пулмаст. Декабĕрĕн 4—5-мĕшĕсенче ларйок заведуйущчийĕ пулман пирки рабочисене çăкăрсăр хăварнă. Тепĕр чухне тата тачка, пиçмен çăкăр сутаççĕ.

Профсойуз организацийĕ дирекци çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшмаççĕ.

С. И.

Активпа ĕçлессине маннă

ЙЕТĔРНЕ. Тăваттăмĕш квартăл вĕçне тухиччен шутлă кунсем çеç йулчĕç. Укçа-тенкĕ пухмали плана пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле. Анчах та Йетĕрне районĕнче ку йенĕпе çителĕклĕ ĕçлени сисĕнмест-ха. Районри финанс пайĕн пуçлăхĕ Кочергинă йулташ инспекторсемпе налог агенчĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе пымаст, вĕсене ĕçре кирлĕ кăтартусем памаст. Страховани инспекторĕ Артемйĕв йулташ йалсене тухса укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатма пулăшмаст.

Финанс пайĕн аппаратĕнчи работниксем укçа-тенкĕ пухас ĕç çине ответсăрла пăхаççĕ. Налог агенчĕсене тата пĕтĕм финанс активне плана тултарас ĕçе çителĕклĕ хутшăнтарман. Çакна пула район тăваттăмĕш квартăл планне 49,6 процент анчах тултарнă. Уйрăмăнах йединоличник хуçалăхĕсенчен укçа-тенкĕ пухасси начар пырат. Лашасем çине хунă налог укçине пухас плана 60 процент çеç тултарнă. Укçа-тенкĕ пухасси пуринчен те ытла Мăн Чураш, Иваньково, Тури Ачак, Мăн Йĕкĕт йалсовечĕсенче йапăх пырат.

Н. Цветков.

Тăваттăмĕш квартăл планне тултарнă

Уйкас йалсоветĕ (Çĕрпӳ р.) тăваттăмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухмали плана 103,3 процент тултарчĕ. Виççĕмĕш квартăл планне те вăхăтра тултарнă. Куншăн Çĕрпӳ райĕçтăвкомĕ куçса çӳрекен хĕрлĕ йалав панă.

Йалсовет работникĕсемпе финанс çекци членĕсем (çекци руководителĕ Гурйĕв йулташ) йалсенче массăлă-ăнлантарулă ĕçе лайăх йĕркелесе пынă. Социаллă-кулђтурăлă тата ытти пысăк ĕçсене ирттерме государствăна укçа-тенкĕ кирли çинчен халăх хушшинче тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

С. Чернов.

Икĕ колхоз икĕ тĕрлĕ ĕçлеççĕ

Шĕнер йалсоветне кĕрекен (Çĕрпӳ р.) „Балтиец" колхоз членĕсем государствă умĕнчи хăйсен обйазательствисене вăхăтра тултарса параççĕ. Укçа-тенкĕ тӳлевĕсене йалан вăхăтчен тӳлесе татса пынă. Кăçал йалхуçалăх налогĕ, страховка, самообложени тата займ укçисене 1910 тенкĕ тӳлемеле пулнă. 1873 тенкĕ тӳленĕ. Займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татса, облигацисене алла илнĕ.

Çав вăхăтрах „Глиссер" колхоз укçа-тенкĕ пухас ĕçре йулса пырат. Кунта парса татман тĕрлĕ тӳлевсем 800 тенкĕ ытла шутланаççĕ.

И. Михайлов.

Тырă сутас ĕç вăйланса пырат

Вăрмар районĕнчи колхозсенче государствăна тырă сутас ĕç саралсах пырат. Уриарти „Çĕнтерекен" колхоз членĕ Кирилл Павлов йулташ колхозниксен аслă пухăвĕнче çапла каларĕ:

— Епĕ ĕлĕк çителĕклĕ пурнăçпа пурăнман, халĕ колхозра пуйан та кулђтурăлă пурăнатăп. Иртнĕ çул хамăн çемйепе 1020 ĕçкунĕ туса, 500 пăта йахăн тĕштырă илтĕм. Кăçал та сахал мар тупăш илетпĕр. Пирĕн тырă ытлашшипех пур. Çак тулăх пурнăçа Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ. Государствăна тырă сутса, епĕр тăван çĕршыва çирĕплетсе тĕреклететпĕр. Колхозсем валђли кирлĕ йалхуçалăх машинĕсене туйанатпăр,— терĕ.

Çавăн пекех Сергей Степанов тата ытти колхозниксем те тырă сутни хамăра усălli çинчен тухса каларĕç.

Çакăн хыççăн колхоз государствăна 225 центнĕр тырă сутма йышăнчĕ.

Районри ытти колхозсем: „Болђшевик" 180, „Хĕрлĕ Кĕтне" 170, „Ударник" 50 центнĕр сутрĕç. Тырă сутас ĕç ытти колхозсенче те вăйланса пырат.

Г. Молостовкин.
Ваç. Алендейĕв.

** ЙЕТĔРНЕ. Кăташ йалсоветне кĕрекен колхозсем государствăна 24 тоннă тырă сутрĕç. Вăл шутран „Пионер" колхоз 11 тоннă, Мичурин йачĕпе тăракан колхоз 10 тоннă, „Хĕрлĕ çалтăр" колхоз 3 тоннă сутнă.

Çавнашкалах Мăн Чураш йалсоветне кĕрекен колхозсенче те 50 тоннă сутнă. Колхозниксем те хăйсенчен ытлашши тырра государствăна сутаççĕ. Ишеккассинчи „Комбайн" колхоз председателĕ Бойкин йулташ 3 центнĕр, колхоз правлени членĕ Данилов йулташ 2 центнĕр сутнă, ытти колхозниксем пĕрер, çуршар центнĕршер сутрĕç.

Шупашкарти спирт савăтĕнчи стахановка Йевдокийă Бедђашова хăйĕн хватерĕнче.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Филармони ĕçĕсем çинчен

Чăвашсен государствă филармонийĕ пĕрлештерсе тăракан музыка коллективĕсем кăçал хăйсем пурри çинчен республикăри мар, республика столицинчи ĕççынниссене те питех систермерĕç.

Чăн та, филармони, искусствăн ытти организацийĕсем пекех, халăх тăшманĕсен аллинчен нумай сийен тӳсрĕ. Сăмахран, симфони оркестрне тăшмансемпе ытти çаплаланчăк çынсем пуçĕпех салатса йарас патне илсе çитерчĕ пулнă.

Анчах Чăваш республикĕнчи искусствă ĕçĕсен управленийĕ халăх тăшманĕсем тунă сăтарла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе халĕ те сӳрĕккĕнрех ĕçлет-ха. Искусствă работникĕсен коллективĕсене тăшмансенчен тата вĕсен хӳрешкисенчен тĕпĕ-йĕрĕпе тасатса, чăн-чăн пултарулă, талантлă кадрсемпе çирĕплетесси—искусствă ĕçĕсен управленин пайанхи татăклă задачи пулса тăрат.

Чăвашсен государствă филармонийĕ, нумай пулмаст пĕтĕм Совет Сойузĕпе пулса иртнĕ совет музыкин вунăкунлăхĕнчен айакра тăрса йулчĕ. Филармони коллективĕсем вунăкунлăх валђли çĕнĕрен нимĕн те хатĕрлемерĕç, халиччен хатĕрленĕ йапаласене пухса, концерт пеккисем туса ирттерчĕç те „çырлахтарчĕç".

Кунашкал „концертсем" ĕççынниссене пăшăрхантарнисĕр пуçне урăх нимĕн те памаççĕ.

Декабĕрĕн 7-мĕшĕнче филармони хăйĕн концертне Чăвашсен Академилĕ театрĕнче туса ирттерчĕ. Пирĕн кунта исполнителĕсене кӳрентерес килмест, анчах çапах та концертра куç умне чи малтан кустарщинă текен киревсĕр йапала тухса тăрат. Пуринчен ытларах çак кустарщинă симфонилĕ оркестрта сисĕнет. Симфонилĕ оркестрăн коллективĕ пĕр кăмăлпа, пĕр туйăмпа çирĕп, йĕркелĕн ĕçлекен коллектив пулса тăман. Оркестрăн хăйĕн уйрăмлăхĕ, стилĕ çук. Тĕрлĕ çĕртен тĕрлĕ сĕрмекупăççăсене, виолончелиссене тата ыттисене пухнă та пĕр-пĕрне „шурă çиппе" çыхăнтарнă.

Тем пек лайăх йапаласенех (Кочетовăн „Тиль Эйленшпигель", Дзержинскин „Тихий Дон" тата „Подвятая целина" оперисенчен илнĕ йурăсене) оркестр сӳрĕккĕн, йĕркесĕр выљат. Музыкантсем час-часах дирижора пăхăнмаççĕ.

Концертăн малтанхи пайĕнче чăваш совет композиторĕсен йапачисене (Кривоносов, Лисков, Лебĕдĕв) пачĕç. Оркестрăн чăваш кĕввисем уйрăмах темĕнле тытăнчăксăр, шĕвĕ, шупка тухаççĕ. Сăмахран, Лебĕдĕвăн „Чаплă маршĕ" концертра тапхăр-тапхăр пачах сӳрĕк, ĕçкĕ йурри пек илтĕнет— нимĕнле маршлăх та йулмаст.

Симфонилĕ оркестрăн пĕр кăмăлпа, пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа çирĕп, йĕркелĕн ĕçлекен коллектив тăвас тесен нумай çине тăмала, тăрăшмала.

Симфонилĕ оркестрăн дирижорĕ Брагинскайă йулташ филармонинче çĕнĕ çын, ăна оркестра йĕркелеме пулăшмала.

Дзержинскин „Тихий Дон" тата „Подвятая целина" оперисенчи йурăсене чăвашсен государствă хорĕпе симфонилĕ оркестр пĕрле пĕрлешсе выљаса пачĕç. Епĕр çак çулсенче чăваш оперине лартма ĕмĕтленетпĕр пулсан, хорпа симфонилĕ оркестрăн çыхăнăвне тата ытларах вăйлатмала, ӳстермеле.

Тӳрех калас пулат, чăвашсен государствă хорĕ йăвăррăн ӳссе пырат, кунта çĕнĕ вăйсем сахал хутшăнаççĕ. Ыйтас килет, искусствăна йертсе пыракансем чăваш халăхĕ хушшинче лайăх, усă сасăлă, талантлă çĕнĕ çынсем хăйсене кирлĕ таран шыраса тупаймаççĕши вара? Тĕлĕнмеле, миçемĕш çул ĕнтĕ хор çаплипех пĕр вырăнта тапăртатса тăрат.

Асăннă концертра уйрăмăн тухса йурлакансем виççĕн кăна пулчĕç. Вĕсен йышĕ те ӳсмест. Чипер, лайăх йурлама пултаракансене те филармонире тивĕçлĕ хакпа хисеплемеççĕ. Сăмахран, талантлă йурăçă Çимулинă йулташа ӳсме никам та пулăшмаст. Вăл хăйне пĕчченĕн туйат. Çавнах каламала Кириллăвпа Андрейĕв йурăçсем пирки те—вĕсен творчĕстви ниепле те пуçламĕш музыкă шкулĕн мачинчен çӳлерех çĕкленеймест.

Епĕр филармони ĕçĕсем пирки ун йурри-музыкисене итленĕ тăрăх калаçатпăр. Филармони ĕçĕсем пайанхи куна халăх ыйтнине ниепле те, нихăш йенчен те çырлахтарса пыраймаççĕ. Çултан çула куçса пыракан кустарщинăна пĕтермеле, искусствă çыннисем халăх ыйтнине татса памала, вĕсен советăн чăн-чăн кулђтурлă пысăк искусствишĕн кĕрешмеле.

Арк. Ĕçхĕл.

Армансен хуçалăхне йĕркелемеле

Вăрмар районĕнчи йухан шывсенчен Енĕш чи пысăк шыв пулса тăрат. Енĕш тăрăх аваларанпах шыв арманĕсем пит нумай пулнă. Анчах, йулашки çулсенче ку шыв çинчи армансем нумайĕшĕ пĕтрĕç, арман пĕвисене пĕвелеми пулчĕç. Ку, паллах, районри тата вырăнти организацисем армансен хуçалăхне йухăнтарса йанинчен килчĕ.

Акă, сăмахран, Пысăк Йенкасси йалĕн çич-сакăр çул кайарах Енĕш шывĕ çинче, аслă çул хĕрринче, пысăк арман пурччĕ. Ку пĕве Енĕш çинчи чи пысăк пĕвесенчен пĕри пулнă. Анчах, йалсовечĕн тимсĕрлĕхне пула, арман хуçалăхне ăçта килчĕ унта салатса йачĕç. Халĕ ĕнтĕ темиçе çул хушши колхозниксем тырă авăртма урăх йал арманĕсене инçете (20-30 километр таранччĕнех) çӳреççĕ. Пĕве хĕрринчи хăвалăхсем хăрса ларчĕç.

Çакнашкалах Енĕш çинчи Пинер-Вăтакас йенчи армансем те нумайĕшĕ йухăнса пĕтрĕç.

ПСК(б)Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Чăваш АСС Республикĕнчи колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмеле тăвасси çинчен" йышăннă постановленире пур кивĕ пĕвесене те çĕнĕрен пĕвелесси çинчен тата çĕнĕрен пĕвесем тăвасси çинчен, пĕвесен таврашĕнче йăвăçлăхсем чĕртесси çинчен уйрăмах кăтартса панă. Районри организацисен, колхозниксен çак паха кăтартусене пурнăçа кĕртес ĕçе халех тытăнса, армансен, пĕвесен хуçалăхĕнче пулнă тăшманла ĕçсен йулашкисене хăвăртрах пĕтерессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле.

М. Романов.

Перепиç листисемпе паллашаççĕ

ШĂХАСАН. Туçи Çармăс, Уйкас-Кипек, Шăхалђ, Кипеч йалсовечĕсенче халăх перепиçне хĕрсех хатĕрленеççĕ. Туçи Çармăс йалсовечĕ перепиç ыйтăвне икĕ хут пленумра сӳтсе-йавнă. Перепиç листисем çине ответ пама вĕренме кружоксем уçнă. Ĕççынниссене çитес перепиç çинчен лайăх ăнлантарса параççĕ.

Ку йалсоветĕнче перепиç кунĕ тĕлне тĕрлĕ пысăк ĕçсене туса ирттерме палăртнă. Йалсоветĕнче хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсен шкулĕсем ĕçлеççĕ. Иалти учителсем перепиç кунĕччен 50 çынна çитĕннисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларма пулнă.

Çул çинче

Чуп-чуп лаша, чуп мала,
Умри тӳрĕ çулпала,
Час çитетпĕр ак йала,
Ата, вĕçтер малала!

Йĕри-тавра шурă йур.
Çуна çăмăл. Кун аван:
Хĕвел пăхат, çил те çук.
Ак тухатпăр вăрмантан.

Çип пек тӳрĕ çулпала
Чуп-чуп лаша, чуп мала.
Хамăр тăван колхоза
Таврăнатпăр хуларан.

Халĕ пурте колхозра
Пурăнатпăр савăнса.
Ав, курăнчĕ хамăр йал,
Ата йуртах йарăнса.

Кăçалхи çул колхозра
Тырă нумай турăмăр.
Хамăртан ытлашшине
Патшалăха сутрăмăр.

Пайан епĕр, иксĕмĕр,
Хулана та çитрĕмĕр.
Тырă сутнă укçапа
Тĕрлĕ тавар илтĕмĕр.

Епĕр пурте колхозра
Хавасланса ĕçлетпĕр.
Çулсеренех, çулран-çул
Вăйлă тырпул илетпĕр.

Чуп-чуп лаша, чуп мала,
Умри тӳрĕ çулпала.
Пирĕн пурнăç колхозра
Куллен кунах малала.

Ст. Йарадай.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммунĕ» хаçатăн нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче, 2-мĕш страницăри 4-мĕш колонкăра, 4-мĕш абзацăн йулашки предложенине çапла вуламала:

«Сăмах революцилĕ кĕрешӳ органĕсем пулса тăракан Советсем çинчен пĕтĕмĕшпе мар, халђхи Советсем çинчен çеç, меньшевиксем тата есерсем йертсе пыракан Советсем çинчен, пырат».

Çав страницăрах, 5-мĕш колонкăн 2-мĕш абзацĕнчи предложенине çапла вуламала:

«Буржуази пĕр çакна çеç тума—Ленина, ăна хăйĕн чи хăрушă тăшманĕ тесе, вĕлерме тăрăшни пирки сйес иккĕленмен».

3.876 выигрыш

Нумай пулмаст Нальчик хулинче (Кабардино—Балкаринче) Осоавиахимăн Пĕтĕм Сойузри 12-мĕш лотерейĕн выљавĕ пулса иртрĕ. Осоавиахимăн Чăваш Совечĕ пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн республикăра çав выљавра 3876 выигрыш, мĕн пурĕ 52.715 тенкĕлĕх, тухнă. Шупашкар хулинче кăна 7.680 тенкĕлĕх выигрыш тухнă.

Улатăр, Трак районĕсенче пиншер тенкĕ выљаса илнисем пур.

СУД

Кулакла саботаж тăвакансем суд умĕнче

Следстви органĕсем Шăмăршă районĕнчи Йараслав йалсоветĕнче кулаксен совета хирĕçле ушкăнне тупса палăртни çинчен пĕлтернĕччĕ епĕр («Чăваш Коммунĕ» хаçатăн нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче тухнă номĕрне пăхăр). Вăл ушкăна паллă кулак, вăрман промышлĕнникĕ Хайлов Алексей йертсе пынă. Совет влаçне хирĕç тăнă çав ушкăнри çынсем тăтăшах государствă вăрманне вăрласа спекулђантла хакпа сутса пурăннă. Государствă умĕнчи обйазательствăсене тултармасăр хăварасси, совета хирĕçле пропагандă тăвасси çав бандăн тĕп „ĕçĕ" пулса тăнă.

Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче Шăмăршăра совета хирĕçле çав ушкăна суд тума пуçларĕç. Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ умне 8 çын: Хайлов Алексей, Хайлов Павел, Хайлов Федăр, Морозов Виктăр, Морозов Порфирий, Морозов Тимофей, Савелйĕв Христофор тата Федотов Петр тăнă.

Суд чи малтан шайка пуçлăхне Хайлов Алексейа допрос турĕ. Допрос пынă вăхăтра çак тăшманăн сăн-пичĕ уççăн палăрчĕ. Хайлов Алексей виçĕ лаша, майракалă шултра выљăхсем тата ытти выљăхсем усранă, государствă умĕнчи пĕр обйазательствăна та тултарман. Хайлов Алексей вăрă ĕçĕшĕн, спекулђаци тунăшăн, саботаж тунăшăн тата ыттисемшĕн вунă хут суд умĕнче пулнă. Вăл пĕрмайах государствă вăрманне вăрласа сутса пурăннă. Час-часах вăл хăйпе калаçакансем умĕнче мухтанса:

— Манăн хамăн пĕчĕк „вăрман хуçалăхĕ" пур, тенĕ. Хайлов Алексей хыççăн Хайлов Павела допрос тăваççĕ. Вăл та Хайлов Алексей пекех государствă вăрманне вăрласа сутса пурăннă, мануфактурăпа спекулђаци тунă. Государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарса пымаст. Судра вăл суйат, фактсене пăтраштарат, анчах та суд ăна улталама памаст, документсем тата малтан следстви тунă протоколсем тăрăх Хайлов Павел совета хирĕçле ĕçсем туса пынине уççăнах палăртат.

Суд председателĕ — Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн членĕ Николайĕв, суд членĕсем—Соçукинпа Базаров йулташсем. Государствă йенĕпе айăплаканĕ—Шăмăршă районĕнчи прокурор Андрейĕв йулташ.

Суд виç-тăват кун хушши пырат.

Н. Стурикăв.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНОВ.

Халăх пултарулăх çуртне
чăвашла та вырăсла та пĕлекен квалификацилĕ çекретар-машинистка
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ
Ĕçунçи—илĕшӳ тăрăх.
Телефон 7—13 йе 5—96.
2—1

Мĕнпур хуçалăх, кооперации, промышлĕннăç, суту-илӳ тата транспăрт организацийĕсене
—ПĔЛСЕ ТАМА.
Шупашкар пристанĕ, договăр тăрăх, грузсемпе таварсене хăвĕн складĕсемпе площадкисенче нумай срукласа тата кĕске сруклăха сыхласа усрама йышăнат.
Сыхласа усранăшăн илекен тӳлев Шывçул транспăрт Халăх Комиссариачĕн тарифĕ тăрăх пулат.
Интересленекен организацисен çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: ул. Кадыкова, д. № 22, контора пристани.
ВВРП пристанĕ.
2—1

Чăваш Аптекоуправленин
тĕп аптекă складĕнче
АЛЛОСКОП текен пĕчĕк
КИНО-АППАРАТСЕМ ПУР.
Çак кино-аппаратсем електросетĕн тĕрлĕ напрйаженипе — 12, 120—220 волђт—ĕçлеççĕ. Аппарат хакĕ 100 тенкĕ.
Аппаратсем шкулсенче, музейсенче, выставкăсенче кăтартма пит лайăхскерсем.
УЙРĂМĂН ÇАКĂН ПЕК КИНОЛЕНТĂСЕНЕ СУТАÇÇĔ:
Абиссиния, Муха—Цокотуха, Что нужно знать о ПВХО, Реконструкция Москвы, Противогазовая защита. Викторина ПВХО, Волк и Лиса, Как мы ходили за грибами.
Кинолентăсен хакĕсем 10 тенкĕрен пуçласа 30 тенкĕ таран.
Çав складрах йăвăç пичкесемпе фанер барабансем сутаççĕ.
АДРЕС: г. Канаш, Базарная площадь, контора центрального аптечного склада. Телефон № 66.
Администраци.
2—1

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Тĕп дезинфекци станцийĕ тата хула совечĕ Шупашкар хулинчи мĕн пур учрежденисене, вĕсен дезинфекци аппаратури, дезинфекци камери тата дезинфекци тумали ытти инвентарсем пур пулсан, çакăнта кăтартнă формăпа Тĕп Дезостанцине сведĕнисем тăратма хушаççĕ:

№№ йĕрки	Йачĕсем	Хисепĕ	Йурăхлăхĕ	Хăш вырăнта	Асăрхаттарни

Çӳлте кăтартнă дезинфекци тумали хатĕрсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн Дезостанци вĕсемпе усă курма йурани çинчен йатарласа ирĕк парат.

Сведĕнисене кăçалхи декабĕрĕн 25-мĕшĕчен йышăнаççĕ.

Кăтартнă срук хыççăн та регистрацилемен дезинфекци тумали хатĕрсем пуррине тупса палăртсан вĕсене пуçтарса илеççĕ.

Сведĕнисем тăратмали адрĕс; ул. Новая, дом № 16.

Хула совет председателĕн заместителĕ Матросов.

Тĕп Дезостанци директорĕ Рошко.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 582 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.